Тантӑш
Элӗк районӗнче

Паян пирӗн "Хаҫатри хаҫат" проектӑн
пиллӗкмӗш кӑларӑмӗ вулакан патне ҫитет.
Ӑна Элӗк район хастар юнкорӗсем хатӗрленӗ.

Чӑваш ачисемпе ҫамрӑкӗсен хаҫачӗ

# Тантӑш



20 (4287) №, 2012, ҫу, 24

Хакӗ ирӗклӗ.
Индексӗ: 54802

# Тӗрлӗ халӑх ҫамрӑкӗсем «Пурте пӗр ҫул-йӗрпе» лагерьте



**Тӗрлӗ халӑх ҫыннисем туслӑ пурӑнччӑр тесе юлашки вӑхӑтра нумай мероприяти иртет. Ҫак тӗллевпех ҫу уйӑхӗн 10-14-мӗшӗсенче Удмурт Республики «Пурте пӗр ҫул-йӗрпе» лагерьте регионти тӗрлӗ наци ҫамрӑкӗсене пуҫтарчӗ. Хӗрсемпе каччӑсемшӗн халиччен курманни, пӗлменни, чухлама та пултарайманни питӗ нумай. Кун пек паллӑ пулӑмран пирӗн пултаруллӑ, хастар яш-кӗрӗм те айккинче юлмастех ӗнтӗ. Чӑваш Енрен Ижевск хулине ЧНК ҫумӗнчи «Хастар» пӗрлешӗвӗн членӗ Наталья Александрова, Етӗрнери 25-мӗш училище студенчӗ Виктор Анисимов (Наталья Николаевна Филиппова ертӳҫипе) тата тутар ҫамрӑкӗсен пӗрлӗшӗвӗн хастарӗ Дамир Садртдинов ҫул тытнӑ.**

– Каласа памалли... виҫӗ кун та ҫитмӗ. Ҫав кӗске вӑхӑтра мӗн чухлӗ ҫӗнӗлӗх, тӗлӗнтермӗш пулчӗ, – сӑмахне пуҫларӗ Наталья. – Кампа кӑна паллашмарӑмӑр пуль: азербайджанӗпе, удмурчӗпе, корейӗпе, еврейӗпе т. ыт. те. Пурте пӗрле ташларӑмӑр, вылярӑмӑр. Хамӑрӑннисӗр пуҫне ытти халӑх юрри-ташшине те пӗлетпӗр халь эпир.

Тӗрлӗ наци культурине аталантарас, манӑҫа хӑварас мар тесе самай тӑрӑшнӑ лагере пуҫаракансем. Хӑш-пӗр халӑхсен «хӳтӗлевҫисене» ӑсталассипе мастер-класс ирттернӗ. Пирӗн хӗрсем марисен пуканине суйланӑ. Наталья ӑна талисман вырӑнне хурать, яланах ҫумӗнче тытать халӗ. Каччӑсем вара кӗрешес енӗпе кайнӑ.

Малтанхи кунхинех пӗр-пӗрне хӑнӑхса ҫитнӗ, юлташланма ӗлкӗрнӗ ҫамрӑксем «Халӑхсен туслӑх ҫуртӗнче» хӑйсен пӗрлешӗвӗсем ҫинчен каласа кӑтартнӑ, ӗҫӗ-хӗлӗпе паллаштарнӑ.

➲➲➲ 9-мӗш стр.

# Хаҫат-журнал ҫырӑнма черет тӑраҫҫӗ



**Хаҫатӑн юлашки номерӗсенче нумай шкулта ҫырӑнтару кунӗ иртни ҫинчен вуласа пӗлтӗмӗр. Эпир те ыттисенчен кая юлмастпӑр, маттурисен йышӗнчех.**

Редакци ӗҫченӗсем килеҫҫӗ текен хыпар ачасене питӗ савӑнтарчӗ. Мӗншӗн тесен "Тантӑш" хаҫат, "Тетте", "Самант" журналсен тусӗсем вӗсем. Хӑнара хамӑр патӑмӑртан вӗренсе тухнӑ Светлана Садовникова пулчӗ. Кӑларӑмсем ҫинчен тӗплӗ те кӑсӑклӑ каласа кӑтартрӗ вӑл. Халӗ ачасене канӑҫ паманни – Сергей Игнашевичпа Артем Дзюба футболистсене интереслӗ ыйтусемпе тӗлӗнтересси. Автографлӑ мечӗк, футболка кашнинех илӗртет!

➲➲➲ 3-мӗш стр.

*Ҫырӑнтару – 2012*




**Эсир вара, туссем,**
Тетте · Самант · Тантӑш
**ҫырӑнма манман-и?**

*2012 ҫулӑн июль-декабрь уйӑхӗсенче илсе тӑма ҫырӑнтару хакӗсем:*
(почтӑра)
"Тантӑш" – 178 тенкӗ те 98 пус,
"Самант" – 151 тенкӗ те 02 пус,
"Тетте" – 115 тенкӗ те 80 пус;

Чӑваш пичечӗн киоскӗсенче:
"Тантӑш" – 132 тенкӗ,
"Самант" – 156 тенкӗ,
"Тетте" – 111 тенкӗ.

**Ҫанталӑк**

| | Ҫӗрле | Кӑнтӑрла |
|---|---|---|
| 24.05 Кҫ | +10° | +16° |
| 25.05 Эр | +8° | +17° |
| 26.05 Шм | +8° | +19° |
| 27.05 Вс | +9° | +20° |
| 28.05 Тн | +10° | +18° |
| 29.05 Ыт | +11° | +22° |
| 30.05 Юн | +14° | +22° |

# Умра – чи хĕрӳ тапхăр: патшалăхăн пĕрлĕхлĕ экзаменĕсем

**Ыран шкулсенче юлашки шăнкăрав янăрĕ. Раççейри 790 пин хĕрпе каччă, Чăваш Енри 9 пин те 500 яхăн вĕренекене юлашки урока йыхăрĕ вăл. Умра – чи хĕрӳ тапхăр: патшалăхăн пĕрлĕхлĕ экзаменĕсем (ППЭ). Малашне пурнăçăн хăш çулне суйласа илесси те вĕсене мĕнлерех тытнинчен килет. Çавăнпа кашниех канăça çухатать.**
**Кăçалхи ППЭ йĕркинче пысăк улшăнусем çук, анчах вĕсем ытти çулхисенчен çирĕпрех иртмелле. Экзаменсенче тĕрлĕ техника хатĕрĕпе усă курассине чарас тĕллевпе кăçалхи тĕрĕслев материалĕсене хăйне евĕр хӳтĕлев паллисем лартни пирки илтнĕ-тĕр.**




**Ют чĕлхесемпе экзамен тытмалли вăхăта ӳстернĕ.** 4 сехет тăсăлакан ППЭ (математика, информатикăпа ИКТ) экзаменĕсенче 5-7 минут тăхтав тума, аудиторирен тухмасăр апатланса илме юрать.

ППЭ тыттаракан аудиторисенче 15 вĕренекенрен ытла пулмалла мар.

**ППЭ мĕнпе усă курма юрать?**

– Физика, хими экзаменĕсене программăламан калькулятор, математика тĕрĕслевне – линейка, географи экзаменне – линейкăпа транспортир илсе кĕме ирĕк параççĕ.

**Телефонпа усă курнине асăрхасан мĕн тăвĕç?**

Экзамен тытакан телефон, смартфон, ноутбук, планшет тата ытти техника хатĕрĕ илсе пыни – ППЭ йĕркине пăсни. Ăна экзаменран кăларса янисĕр пуçне административлă майпа, 19.30 статьяпа килĕшӳллĕн, пин тенкĕ таран явап тыттарма пултараççĕ.

**Патшалăхăн пĕрлĕхлĕ экзаменне тытмасăр аслă шкула кĕме пулать-и?**

– ППЭ кăтартăвĕсемсĕр, вĕренме кĕмелли экзамен кăтартăвĕсемпе 2009 çулччен шкул пĕтернисене çеç илме пултараççĕ. Ыттисен ППЭ тытмаллах.

**ППЭ кăтартăвĕсем аттестатри оценкăсем çине витĕм кӳреççĕ-и?**

– Çук. Аттестат илессипе илмесси вара вĕсенче мĕн чухлĕ балл пухнинчен килет. Ăна тивĕçес тесен вырăс чĕлхипе тата математикăпа патшалăхăн пĕрлĕхлĕ экзаменне «3» паллăлăх та пулин çырмаллах. (Вырăс чĕлхипе «2» илес мар тесен кăçал 36 балл, математикăпа 24 балл пухмалла). Унсăрăн шкулта вĕреннине çирĕплетекен справкăпа тухса кайма тивĕ. Çак икĕ предметран пĕринпе кăна «2» çаклатсан ăна кăçалах, резерв кунĕнче, тӳрлетме пулать. Математикăпа та, вырăс чĕлхипе те кирлĕ чухлĕ балл пухайманнисем çитес çул кăна тепĕр хут экзамен тытма пултараççĕ.

**ППЭ çырнă ĕçсене ăçта илсе каяççĕ, вĕсене камсем тĕрĕслеççĕ?**

– «А» тата «В» пайри ыйтусен хуравĕсене электрон мелĕпе регионти центра ăсатаççĕ. «С» пайрисене ятарлă комиссие кĕртнĕ аслă тата вăтам професси пĕлĕвĕ паракан вĕрентӳ учрежденийĕсен, вăтам шкул преподавателĕсем тĕрĕслеççĕ. Кашни ĕçе икĕ никама пăхăнман эксперт пăхса тухать, унтан федераллă центра ăсатаççĕ. Унти автомат вĕсене малтанхи «А» тата «В» пайри хуравсемпе пĕрлештерет.

Ĕçсене регион шайĕнче (вырăс чĕлхипе, математикăпа) 6 кун хушшинче, суйласа илнĕ предметсемпе 4 кунра тĕрĕслесе ĕлкĕрмелле, хушма (резерв) кунĕсенче тытаканнисене – 3 кунра. Мускавра регионсенчен килнĕ хыççăн 5 кун хушшинче пăхса тухмалла.

**ППЭ чылайăшне хумхантарать, çавна пула малтанах, экзамена кĕрсенех çухалса каякансем те тĕл пулаççĕ. Тĕрĕслеве каякансен мĕн-мĕн асра тытмалла-ха?**

– Лăпкăлăха сыхласа хăварма тăрăшмалла, шухăшсене пĕр çĕре пухмалла. Ыйтусене хуравланă чух тимлĕхе ӳстермелле. Заданисене тимлĕ вуласа ăнланмасăр йăнăш яракан уйрăмах нумай иккен. Ансат ыйтусенче йăнăшни математика экзаменĕнче уйрăмах тăтăш тĕл пулать: тĕрĕс мар хуравсен 30 процентне яхăн тимсĕрлĕхе пула янăскерсем. Вĕтĕ шрифтпа çырнă, скобкăна хупнă условисемпе асăрхаттарусене шута илменрен йăнăш тăвакан та чылай. Ахăртнех, çапла майпа пирĕн тимлĕхе, асăрханулăха ӳстересшĕн – ĕç хучĕсенче, банк документчĕсенче чи кирлине вĕттĕн, ан асăрхаччăр тенĕн пичетлесси йăлана кĕчĕ пулас.

Çăмăлрах, хăвăр ăнланакан заданисене чи малтан пурнăçлама сĕнеççĕ. Кăткăсраххисем патне кайран, вăхăт юлсан, тепĕр хут таврăнма пулать.

# Шпаргалкăсен усси е çук пĕлӳпе инçе каяймăн…




**Кĕçех шкул ачисемпе студентсемшĕн хĕрӳ тапхăр пуçланать. Экзаменсем кунсерен мар, сехетсерен тенĕ пек çывхарса килеççĕ. Çавна май пĕрисем хăйсен ăс-пуçне шанмасăр урса кайсах шпаргалка çыраççĕ. Теприсем библиотекăсенчен тухма пĕлмеççĕ, кĕнеке хыççăн кĕнеке шĕкĕлчеççĕ. Виççĕмĕшĕсем: “Вилес умĕн пĕрех сывласа тăранаймăн. Вун пĕр çул хушшинче ăсласа çитерейменнине пĕр-ик эрнере пуçа вырнаçтараяс çук, тапаçланма та кирлĕ мар”, – тесе алă сулаççĕ. Тăваттăмĕшĕсем тĕрĕслеве лăпкă кĕтсе илеççĕ. Хăйсем çухалса каймассине çирĕп шанаççĕ вĕсем. Вĕренӳ материалне системăланă, билет ыйтăвĕсене пăхса тухнă. Паян тесен паян шăкăр-шăкăр хуравлама хатĕр. Çапах кунашкалли питех те сахал. Вĕренекенсенчен чылайăшĕ “страхланма” тăрăшать. Пĕлнĕ пек туйăнакан информациех шпаргалкăсене кĕртет. Вĕсемпе усă курма палăртмасан та, шурă хута хуратаççĕ, листа хыççăн листа вĕçтереççĕ. “Ан тив, пултăр. Паллă кун кирлĕ пулĕ. Капла шанчăклăрах. Мана мар тăк, теприне пулăшĕ”, – шухăшлаççĕ çамрăксем.**

Психологсем çирĕплетнĕ тăрăх, шпаргалкăсем хатĕрленин усси пысăк. Вĕренекен юрăхлă материала шыранă, çырнă хушăра информацин çур пайне, хăшĕ-пĕри ытларах та, ас туса юлать иккен. Калăпăшлă текстсене, задачăна тĕппипех шутланине мĕнле пур, çапла куçарса илейместĕн-çке. Вырăнĕ хĕсĕк, сахал. Ирĕксĕрех суйлама, кĕскетме тивет. Чи пĕлтерĕшлине палăртма, пĕлӳ хуранĕнчен туртса кăларма хăнăхать шкул ачи. Ку процесс пуç мими хутшăнмасăр пулмасть паллах. Çапла вара ăса хывăнса юлать. Экзаменра аса килет. Çакна ăнланакан ăслă вĕрентекенсем хăйсемех шпаргалкăсем тума сĕнеççĕ. Çамрăк ĕçленине кăтартса парать-çке-ха ку. Кахалланса выртман, урамра йытă хăваласа чупман вăл, тăрăшнă. Апла, “2” паллă илместех.

Анчах шпаргалкăсен сиенĕ те пур. Вĕсем çумрине пĕлекен шкул ачи е студент: “Преподаватель хăçан тухса каять-ши, хăçан тепĕр еннелле çаврăнать-ши? Формулăсене мĕнле туртса кăлармалла-ши?” – тесе йĕп çинчи пек ларать, хытă пăлханать. Çавăнпах мĕн пĕлнине те манас хăрушлăх пысăк. Хумханма кирлĕ мар. Чи малтан яланах пуçа пĕрремĕш мĕн килнине çырса хумалла. Вак-тĕвекĕ кайран аса килет. Хурав майĕпен тарăнланать, тулать. Чăх пĕчĕккĕн сăхсах тăранать. Эпир вара йăлт часрах та курттăммăн илесшĕн.

Çырса илнине асăрхасан экзаменран кăларса яма пултарасси пирки те манмалла мар. Маларах-и е кăшт каярах – кирек мĕнле ултав та çиеле тухать. Ун чухне намăса ăçта чикмелле? Тĕрĕслеве тивĕçлĕ чăтса ирттерес тесен мĕн ачаранах тăрăшса вĕренмелле. Учитель сăмахне пĕр хăлхаран кĕртсе тепринчен кăларса ямалла мар, хушнине пурнăçламалла. Вăрттăн хут таткисенчен килмелле мар шăпамăр. Шпаргалкăсемпе çеç усă курса “5” илесси тĕп тĕллев пулмалла мар нихăçан та. Экзамен пурнăç тĕрĕслевĕн ансатрах моделĕ. Ăна мĕнле кĕтсе илнинчен нумай килет. Кулленхи йывăрлăхсене шпаргалкăсем пулăшнипе çĕнтерейместĕн-çке. Кĕрешĕве хăвăнах тухма тивет. Тар тăкмасăрах лайăх паллă туянакансем (ун пеккисем те пур çав) тĕслĕх ан пулччăр сирĕншĕн.

Хăв çитĕнтермен улмуççи çимĕçĕ тутлах та мар. Унăн тĕшши çук, ăшĕ хăвăл. Кӳлепи кăна капăр. Вăл пушă япалапа мĕн тумалла тет? Ниме юрăхсăр, ниçта усă курма çук. Çук пĕлӳпе ăçтах каяйăн? Кайсан та инçех çитеймĕн.

*Ольга АВСТРИЙСКАЯ.*

*Рубрикăна Алина ГЕРАСИМОВА (тел. 28-85-69) ертсе пырать.*

Тантăш
чăваш ачисемпе çамрăкĕсен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви; Чăваш Республикин Культура министерствин «Тантăш» хаçат редакцийĕ» Чăваш Республикин автономи учрежденийĕ

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● АДРЕС
428019, Чувашская Республика,
г. Чебоксары, пр. Яковлева, 13,
VII этаж, АУ Чувашской Республики "Редакция газеты "Тантăш"

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" РПУП
(428019, Чувашская Республика,
г. Чебоксары, пр. Яковлева, 13) пичетленĕ, редакцире наборланă тата калăпланă

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" РПУП ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ТЕЛЕФОНСЕМ
тĕп редактор: 56-15-30
тĕп редактор çумĕ, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
яваплă секретарь: fedor-chernov@rambler.ru 28-83-98
шкул ачисемпе çамрăксен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 28-85-06
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-96
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-91
набор цехĕ: 56-11-80

● ТĔП РЕДАКТОР
В.НИКОЛАЕВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
С.САДОВНИКОВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Ф.ЧЕРНОВ

● ЭЛЕКТРОНЛĂ АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
3014 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 145 экз.

● ЗАКАЗ
№1759
Пичете çу уйăхĕн 23-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.tst.smi21.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Государственным комитетом РФ по печати – свид-во №01722 от 24.03.1995г. СМИ перерегистрировано в связи с изменением состава учредителей 02.03.06 г. св-во ПИ №ФС77-23538 Фед.службой по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия. В св-во о регистрации СМИ внесены изменения от 22.07.11 г. ПИ № ФС77-45938.

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 16 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Хаçат-журнал çырăнма черет тăраççĕ

1-мĕш стр.

Çавăн пекех хаçат-журнала тĕрлĕ материал çырса ярасси пирки те калаçрăмăр. Тĕл пулу хыççăнах заметка, сăвă-калав шăрçалама чупрĕç вĕренекенсем.

"Тетте", "Тантăш", "Самант" хаваспах çырăнчĕç, пĕри тепринчен çÿлерех çĕклет аллине. Почтальон квитанци парса ĕлкĕреймест. Çитес çур çулта вĕтăр сакăр ача илсе тăрĕ çак паха висĕ кăларăма. Хăшĕсене пĕр хаçат е журнал кăна вулани çырлахтармасть – иккĕшне те кăмăлласçĕ. Сăмахран, 10-мĕш класра ăс пухакан Мария Веникова мĕн ачаран туслă ку кăларăмсемпе. "Тантăш" та, "Самант" та çырăнчĕ вăл. 9-мĕш класри Алиса Портнова та унран юласшăн пулмарĕ. 7-мĕш класри Игорь Тихонов "Тантăшпа", ача садне çÿрекен йăмăкĕ Евгения "Теттепе" киленĕç малашне. Унсăр пуçне 2-мĕшсем (вĕрентекенĕ – Галина Жилина) "Тетте", 9-мĕшсем (класс ертÿçи – Анна Портнова) "Самант" çырăнчĕç. "Теремок" ача садне те парне турăмăр – "Тетте" килсе тăрĕ вĕсем патне. Маларах çырăнма ĕлкĕрнисем те сахал мар. Лотерейăна ку маттурсем те хутшăнчĕç. Кама мĕн тивĕçнине, хăшĕн телейĕ пысăкраххине уяв вĕçĕнче пĕлтĕмĕр. Кĕнеке, ручка, блокнот выляттарнă чухне: "Мана тухтăрччĕ", – тесе кĕтесçĕ пурте.

Тĕп парне, 2014 çулти Олимпиадăна халалланă укçа хуçи 7-мĕш класри Дмитрий Дергунов пулчĕ.

Кун пек хаваслă, хавхалантарулă тĕл пулусем ирттерни ачасене çунатлантарать, вулас, пĕлес, çырас, хăйсемпе паллаштарас туртăмне тата та вăйлатать. Эпир те, вĕрентекенсем "Тантăшпа", "Теттепе", "Самантпа" уроксенче тăтăшах усă куратпăр – питĕ пысăк пулăшу.

Çырăнтару кунĕ хыççăн пирĕн шкулпа хаçат-журнал хушшинчи тачă çыхăну тата та çирĕпленчĕ.

***Анна ПОРТНОВА.***

Елчĕк районĕ,
Кушкă шкулĕ.

# Ивановсен çемйи – сÿнми хĕлхемлĕ юратушăн!

## Пĕтĕм тĕнчери çемье кунне 1993 çултанпа паллă тăваççĕ

Чăнах та, çемье – тапса тăракан таса çăл куç евĕр. Туслă йышра хĕвеллĕ те ăшшăнрах пăхать.

Пĕрне пĕри хисеплесе юратăва упрама пĕлекен мăшăрпа паллашас килчĕ, çавăн йышши çынсене шыраса юлташăн тăван ялне кайрăм...

Пимен Ивановичпа Ефросиния Васильевна Ивановсем 52 çул пурнăç сукмакĕпе пĕрле утаççĕ. Мана вĕсен чунĕсенче çутă пайăркасем йăлтăртатнăнах туйăнчĕ. Вĕсене çакăн чухлĕ пĕрле пурăнма мĕн пулăшса пынăши? «Çемьере ăнлану, пĕр-пĕрне сума суса хурлăха та, савăнăçа та пĕрле пайлама пĕлни, шанни, ĕненни кирлĕ. Ача-пăча çакна курса, туйса ÿссен тин таса чун-чĕреллĕ пулма пултарать. Пурне те юратма вĕренме сунатăп. Çумри телейĕре упрама пĕлĕр. Вара пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулĕ», – тесе хуравларĕ мăшăр.

### Пимен Иванович кун-çулĕ

1932 çулта çуралнă. Ачалăхĕ Пшонкă ялĕнче иртнĕ. 1940 çулта Кĕçĕн Шетмĕри шкулта вĕренме тытăннă. Кайран Çĕрпÿре профтехшкулта ăс пухнă. Çĕвĕç пулнă. Ун хыççăн вăл Шупашкарта вăй хунă. 1957 çулта «Волга» колхозра бригадирта тăрăшнă. Шоферта та çанă тавăрса вăй хунă. Кĕçĕн Шетмĕ ял советне те ертсе пынă.

### Вăрçă йÿççине тутаннă хĕр

Пимен Иванович мăшăрĕ, Ефросиния Васильевна, сăпайлă та ĕçчен лара-тăма пĕлменскер ял культурине аталантарас енĕпе вĕтăр тăхăр çул тăрăшнă. Тивĕçлĕ канăва тухсан та юратнă ĕçне пăрахман.

Ачалăхĕ Кăмакал ялĕнче иртнĕ. Çакăнтах вăл çут тĕнчене килнĕ. Тăван çĕр-шыв Аслă вăрçи кĕрленĕ. Ку вăхăтра епле пурăнма тивнине хальхи пекех ас тăвать. Хаяр вăрçă чĕре суранĕсĕр иртмен. Пиллĕкмĕш класра пĕлÿ илнĕ чухне амăшĕ вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. Ашшĕ вара вăрçăран йывăр сусăрланса таврăннă. Пĕтĕм ĕçе аслă хĕр пĕрчийĕн тума тивнĕ.

Вăтам шкул хыççăн алла аттестат илнĕ. Малалла ăс пухма та пултарнăха Евруç аппа. Кăштах та пулин алă çавăрса яма укçа ĕçлесе илесси те канăç паман ăна. Унăн йăмăкĕсемпе шăллĕне ура çине тăратмалла пулнă-çке. Çулталăк çурă колхозра счетоводра тăрăшнă. Каярахпа ăна культура пайне ĕç сĕнеççĕ. Тăрăшулăхĕшĕн ăна «Чăваш АССР культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят парса чысланă. «Ĕçри хастарлăхшăн» тата «Ĕç ветеранĕ» медальсемпе наградланă.

### Пĕрлешрĕмĕр эпир санпа чунтан юратнăран...

Вĕсем Ефросиния Васильевна ĕçлекен Пшонкăри клубра паллашнă иккен. Çемье çавăрса иккĕн пĕр йăвара пурăннă. Хура шурне те сахал мар курнă. Болеслава, Вадима тата Олега çитĕнтернĕ чух йывăрлăхсем тупăнсах тăнă. Ĕçе те ĕлкĕрмелле, килти вак-тĕвеке те пурнăçламалла. Апла пулин те пĕлĕвне ÿстерес тĕллев ăна канăç паман. Вăл Çĕрпÿри библиотека техникумĕнчен куçăмсăр майпа вĕренсе тухнă.

Паян Пимен Ивановичпа Ефросиния Васильевнăран савăнăçлă мăшăр çук та пулĕ. Юратнă тĕпренчĕкĕсем пурнăçра хăйсен вырăнĕсене тупма пултарнишĕн чунтан хĕпĕртеççĕ вĕсем. Болеслав – медицина службин çар полковникĕ. Вăл Екатеринбургра мăшăрĕпе пурăнать. Иккĕмĕш ывăлĕ шăл тухтăрĕ пулса Чул хулара тăрăшать. Кĕçĕнни – Олег – ялтах тĕпленнĕ. Вăл мăшăрĕпе пĕрле, Галина Васильевнăпа, ветеринар службинче вăй хурать. Çирĕп те таса юратăва упракансене, Пимен Ивановичпа



Ефросиния Васильевна Ивановсене, ывăлĕсемпе кинĕсем, ултă мăнукĕ, сывăх тăванĕсем, кÿршисем пурте чун-чĕререн юратаççĕ.

Пимен Ивановичпа Ефросиния Васильевнăна нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх, сÿнми юрату, телей сунас килет. Вĕсем çамрăксене этемлĕх вăйĕ юратура, çемьере пулнине ĕнентернĕшĕн, ырă тĕслĕх панăшăн чĕререн тав.

***Екатерина НИКОЛАЕВА,***
***ЧПУ студентки.***

*Пĕр шкултан хыпарлаççĕ*

# Футбол пĕрлештерет

Спорт туслăха çирĕплетет тесе ахальтен каламаççĕ иккен. Эпир урам ачисемпе час-часах тĕрлĕ спорт ăмăртăвĕ йĕркелетпĕр. Хальхинче футболла выляма тухрăмăр. Алешăпа Дима тата Саша пĕр командăра пулчĕç, эпĕ Димăпа тата Денисрпа – тепĕр ушкăнра. Вăйă хĕрсе пычĕ. Эпир туссен хапхине çичĕ мечĕк тапса кĕртрĕмĕр, вĕсем вара пилĕк очко пухма пултарчĕç. Туссем çакăншăн кăшт кÿренчĕç те пулас. Анчах вăйă вăйах çав. Кÿренӳ нумая пымарĕ. Каллех пĕрле выляма пуçларăмăр та туслашрăмăр. Туслăхран хакли нимĕн те çуккине эпир тепĕр хутчен ăнланса илтĕмĕр.

# Ĕçре туслăх çуралать

Шкула тирпей-илем кĕртесси пирĕн шкул ачисем хушшинче çирĕп йăлара. Хамăр вĕренекен пĕлÿ çуртне йĕркеллĕ тытма, тасалăха упрама тăрăшатпăр. Хальхинче вара шкул таврашне илем кĕртме класĕпех тухрăмăр. Кашни тăрăшса та хавхаланса ĕçлерĕ. Эпир хамăр ĕçшĕн чунтан хĕпĕртерĕмĕр.

***Георгий КОЛЬЦОВ.***

Шупашкар районĕ,
Ишек шкулĕ.

# Ентешпе мухтанатпăр

Пирĕн шкул Совет Союзĕн Геройĕ Антон Петрович Петров ячĕллĕ. Кăçал вăл çуралнăранпа 110 çул çитрĕ. Çав кун шкул ачисем тата ял çыннисем пысăк уяв иртерчĕç. Майăн 9-мĕшĕнче вара татах та сумлă мероприяти пулчĕ: шкулта ентеше халалласа мемориал хăми уçрĕç. Шкула районти хăнасем те пуçтарăнчĕç, Антон Петровичăн тăванĕсемпе тата ял халăхĕ килсе çитрĕ.

Эпир, ачасем, асра юлмалли куна хутшăннăшăн питĕ савăнатпăр. Ăна нихăçан та манмăпăр.

Антон Петровичăн орден, медаль нумай. Ăна икĕ хутчен Ленин орденĕпе, тăватă хутчен Хĕрлĕ çăлтăр орденĕпе, Кутузов, Богдан Хмельницкий орденĕсемпе наградăланă. Эпир унпа мухтанатпăр.

***Женя ТИХОНОВ.***

Канаш районĕ,
Аччă шкулĕ.

# Чи хаклă мул – анне пурри

*Хĕвел шевли – анне кулли,*
*Анне сасси – чĕкеç юрри.*
*Анне пулсан – телей тулли,*
*Чи хаклă мул – анне пурри.*

**А. ОРЛОВ.**

Анне... Çапла чĕнетпĕр хамăра кун çути парнеленĕ чи сывăх та хаклă çыннăмăрсене хисеплесе те сума суса. Вĕсем пуррипе телейлĕ эпир çутă тĕнчере. Кăмăл хуçăлать-и, хуйхă-суйхă пусать-и – анне патне васкатпăр, ун хÿттине кĕтетпĕр, вăл пулăшасса шанатпăр...

Пĕчĕк ача чи малтан "анне" теме вĕренет. Чи ăшă сăмахсем те, чи хаклă парнесем те ăна çитеймĕç тав тума. Ача чухне ăнланса-пĕлсех каймастпăр çав аннен пурнăçĕ пачах та çăмăл маррине. Ларса канма вăхăчĕ çуккине те асăрхаймастпăр. Ачисемшĕн, вĕсен сывлăхĕшĕн чĕрипе çуннине туймастпăр, ун çинчен шухăшламастпăр та.

Анне алли пуринчен те ачаш та çепĕç, вăл тем тума та пĕлет. Чĕри те чи сисĕмли, вăл пурне те курать, туять, яланах пулăшу пама тăрăшать. Сывăх çыннăм çумра чухне пурте пур: çепĕç сăмахсем те, илемлĕ сăпка юрри те, ăшă кулă та...

Вăл пире çынна хисеплеме, ыр сунма, тирпейлĕхе, çав вăхăтрах ватăпа ватă пек, çамрăкпа çамрăк пек пулма вĕрентет.

Эпир чирлесен аннен куçĕ хурлăхлăн пăхать. Çĕр çывăрмасăр пирĕн умра ларать. Çепĕç аллисем çурăмран лăпкасан темĕнле йывăр чир те çăмăлланать.

Манăн аннене Надежда Георгиевна Салмина тесе чĕнеççĕ. Вăл Кивĕ Ахпÿртри тĕп шкулта ачасене тарăн пĕлÿ парассишĕн тимлет. Вĕренекенĕсем те аннеме хисеплеççĕ. Учитель ĕçĕ кăткăс та йывăррине пурте пĕлетпĕр. Мĕн чухлĕ тÿсĕмлĕх, вăй-хал кирлĕ вĕрентекенсене. Шел пулин те, çакна шкулта ăс пухнă чухне туйсах каймастпăр.

Надежда Георгиевна пĕррремĕш учительне ăшшăн аса илет. Ăна питĕ юратнипех пуль, учитель пулас ĕмĕчĕ çуралнă.

Анне – эсĕ пирĕн тĕлĕнтермĕш. Мĕнешкел сисĕмлĕ, ăшă сан чĕрÿ. Эсĕ таврари илемлĕхе е киревсĕрлĕхе витĕр куратăн. Айăпа кĕрсен – йăнăша йышăнма вĕрентетĕн. Йывăрлăхра – пулăшма çул шыратăн, çĕнĕ паратăн.

Килте вара анне пирĕншĕн, ачисемшĕн, яланах тăрăшакан, пăшăрханакан, ырă кăмăллă çын, аттешĕн – юратнă мăшăр, çемье ăшши, вучах управçи. Эпĕ хамăн аннене чун-чĕререн юрататăп, унпа савăнатăп, мухтанатăп, мăнаçланатăп. Вăл пурришĕн Турра тав тăватăп. Сывăх çыннăма никампа та, нимĕнпе те улăштарма пулмасть. Манăн анне пек çын çакă çутă тĕнчере урăх çук!

***Кристина САЛМИНА.***

Патăрьел районĕ, Кивĕ Ахпÿрт.

# Хам шкулпа мухтанатăп

Кăçал пирĕн шкул 45 çулхи юбилейне паллă турĕ. Вăл 1967 çулта уçăлнă, ун чухне Шупашкарти 18-мĕш шкул шутланнă. Унăн пĕрремĕш директорĕ Зинаида Степановна Степанова лайăх вĕрентекенсене пухма пултарнă.

3-мĕш шкулта тăрăшуллă учительсем ĕçлеççĕ, пĕр-пĕрне яланах пулăшаççĕ. Çак тапхăрта кунтан 34 вĕренекен ылтăн, 24 çамрăк кĕмĕл медальпе вĕренсе тухнă. Чылайăшĕ паллă çын пулса тăнă.

Шкулăн хальхи директорĕ Любовь Александровна Обрубова. Кунта паян 500 ытла ача ăс пухать. Вĕренекенсенчен чылайăшĕ тĕрлĕ ăмăртупа конкурсра палăрать. Виктория Лисицына, Евгений Плотников, Никита Кунов çитĕнĕвĕсем уйрăмах курăмлă.

Эпĕ хам вĕренекен шкулпа мухтанатăп. Хитрелен, ачасене яланах ыррине вĕрент!

***Диана ШИХРАНОВА, 6 "б" класс.***

Çĕнĕ Шупашкар.

Тантăш
20 №, 2012, çу, 24

# Пионер ачалăхăм асрах...




**Пионер организацийĕ тахçанах çук ĕнтĕ. Анчах аслăрах-хисем, çак числă ята илтсе курнисем, паян та ырăпа аса илеççĕ пионер ачалăхне. Хĕрлĕ виç кĕтеслĕ галсту-ка, пăнтăр-пăнтăр параппана, кăвайт тавра пухăнса юрланине, кивĕ хутпа (макулатура) тимĕр-тăмăр ăмăртмалла пуçтарнине ăçтан манайăн-ха? Çамрăк ăру кун пирки истори учебникĕсенчен тата ашшĕ-амăшĕ, кукашшĕ-кукамăшĕ каласа панинчен çеç пĕлет çав.**

**Шел, эпĕ те пионер пулса курман. Çавăнпа Вăрнар районне кĕрекен Калинино шкулĕнчи вĕренекенсенчен редакцие килнĕ материалсемпе паллашма питĕ кăсăклă пулчĕ мана. Нумай çĕннине пĕлтĕм. Тата: "Мĕншĕн халĕ пионер организацине чĕртсе тăратма май çук-ши?" – текен шухăш пырса кĕчĕ пуçăма. Кăçал унăн 90 çулхи юбилейне паллă тумаллаччĕ. Вулар-ха, эппин, ачасен ĕçĕсене.**

## Пионер организацийĕ çурални

Пионер организацийĕ çуралнă кун – 1922 çулхи çу уйăхĕн 19-мĕшĕ. Малтанах Спартак ячĕпе хисепленнĕ вăл. 1924 çулхи кăрлач уйăхĕнчен вара В.И. Ленин ятне панă. 1922 çулта Етĕрне уесĕнче те пирвайхи пионер отрячĕсем йĕркеленĕ. Етĕрнери ача çурчĕ çумĕнче – Володарский, хресченсен ячейки çумĕнче Зиновьев, Калинин, Спартак ячĕллисем пулнă. Кашнинчех – 60 ытла ача. Нурăс салинче (хальхи Калинино) 1926 çул вĕçĕнче ĕçле пуçланă.

Пионерсем коммунизм юхăмĕн турачĕсенчен пĕрисем пулнă. Кунсăр пуçне – парти, комсомол, октябреноксем. Пионера 10-15 çулхи ачасене отрядăн пĕрлехи пухăвĕнче йышăннă. Отрядсем вунă çынран тăракан звеносене пайланнă. Звеньевойне çур çуллăх суйласа лартнă, кайран каллех улăштарнă. Отряд пуçĕнче вара комсомол йышĕнчи вожатăй тăнă.

Пионер отрячĕсем çумĕнче 7-10 çулхи шăпăрлансен-чен октябреноксен звенине те тунă. "Çăлтăрчăксем" тенĕ вĕсене. Кашнинче – 7-10 вĕренекен. Ертӳçи – пионер.

*Алексей ВОЙНОВ, 8 "б" класс.*

## Камсем вĕсем пионерсем?

Пионерсен хăйсен саккунĕсем, пурнăç правилисем пулнă:

– пионерсем рабочисен класĕн ĕçне тата Ильич халалне çирĕп пурнăçлаççĕ;

– пионер – пĕтĕм тĕнчери рабочисемпе хресченсен пионерĕсен юлташĕ;

– пионер пĕлӳ патне туртăнать. Пĕлӳпе хăнăху – ĕç кĕрешӳĕнчи вăй;

– пионер хăйĕн тата таврари çынсен сывлăхне упрать. Вăл ятлаçмасть, туртмасть, ĕçмест. Ирех тăрать, çăвăнать, зарядка тăвать;

– пионер ĕçчен; çине тăма, кирек мĕнле лару-тăрура та ĕçлеме пултарать.

Октябреноксен те хăйсен йĕркисем пулнă:

– октябренок çамрăк пионер пулма ăнтăлать;

– октябренок ӳт-пĕвĕпе кĕлеткине тата тумтирне тасалăхра тытать;

– октябренок ĕçлеме юратать.

Кашни пионер отрячĕн хĕрлĕ ялавпа значок пулнă, звеносен – виç кĕтеслĕ пĕчĕк ялавсем. Хĕрлĕ косынкисене галстук евĕр çыхнă. Пилĕк пӳрнене тӳрĕ тытса алла çӳле çĕклесе саламланă пĕр-пĕрне. "Ĕç кĕрешĕвне хатĕр пул!" – тенине хирĕç: "Яланах хатĕр!" – тесе хуравланă. Пионерсен йышне кĕнĕ чухне ятарлă сăмах каланă: "Эпĕ, СССР çамрăк пионерĕ, В.И. Ленин ячĕллĕ пионер организацине кĕнĕ май рабочи класăн ĕçĕшĕн тата пĕтĕм тĕнчери ĕçчесене ирĕке кăларас кĕрешӳре кар тăма, Ильич халалне тата çамрăк пионерсен саккунĕсене тӳрĕ те пăрăнми пурнăçлама туссем умĕнче тупа туса сăмах паратăп". Анчах пурте çапла шантарайман. Хăйсем пурнăçлаймассинчен шикленнĕ. Ахаль çеç, ячĕшĕн, калас килмен.

*Оля ЛАСТУХИНА, 8 "б" класс.*

## Пионерсем – Совет Союзĕн Геройĕсем

Пионерсен организацийĕ вăйă мар, çитĕнекен ăрăва воспитани парас тĕллевлĕ ĕç пулнă. Шăпах ун чухнехи ачасем каярахпа Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăнса фашистсене тĕп тунă. Совет Союзĕн Геройĕсен йышĕнче 4 пионер: Леня Голиков, Марат Казей, Валя Котик, Зина Портнова. Çапăçусенчи паттăрлăхшăн вилнĕ хыççăн тивĕçнĕ вĕсем çак ята.

1928 çулта Нурăсра 36 пионерпа 39 октябренок пулнă. Виçĕ звенона кĕнĕ вĕсем. "Хĕрлĕ çăлтăр" (звеньевойĕ – Ефросинья Харитонова, пулăшаканĕ – Федор Федоров), "Хĕрлĕ трактор" (звеньевойĕ – Агапия Ефремова, пулăшаканĕ – Анастасия Александрова), "Ака пуç" (звеньевойĕ – Николай Николаев, пулăшаканĕ – Яков Петров). Хастар ĕçлекенсем – Зоя Цветкова, Капитолина Щукина, Нина Малова, Павел Харлампьев т.ыт.те. Вожатăйĕ Александра Сапожникова, ун хыççăн Герасим Харлампьев пулнă.

*Анастасия МАЛОВА, 8 "б" класс.*

## Пионерсен ĕçĕ-хĕлĕ

1932 çул тĕлне Нурăс шкулĕнче виçĕ отряд пулнă. Клубпа телевидени мĕнне пĕлмен ялта вăл вăхăтра. Мĕн пур пионер ĕçĕ шкулта, отрядсемпе звеносенче иртнĕ. Вĕсем пĕр-пĕрин хушшинче ăмăртнă, пĕри тепринешĕн явап тытнă. Никам та кая юлса пыман. Кружоксене активлă çӳренĕ, массăллă субботниксем туса йывăç лартнă. Горн кăшкăртса, параппан çапса та юрласа утнă вăрмана. Ачасем хыççăн речĕ-речĕпе юман, чăрăш, хурăн хунавĕсем лара-лара юлнă. Паян вĕсем тем çӳллĕш кашлаççĕ. Таврари çынсем унта кăмпа-çырлана çӳреççĕ.

Отрядсем тимĕр-тăмăр, йĕкел пуçтарнă; ваттисемпе пĕчченнисене çĕр улми кăларма, вутă татса çурма, картишре, çуртра тирпейлеме пулăшнă; "Çĕнĕ пурнăç" стена хаçачĕ кăларнă, пионерсен йăли-йĕркине ăша хывнă, ертӳçĕсен биографийĕсемпе паллашнă. Пĕр çулхине Нурăс пионерĕсем 218 пăт йĕкел те пухнă. Шкулăн хăйĕн пахчи, хуçалăхĕ пулнă. 10-12 çурăх усранă. 1928 çулта вĕренекенсем кашнинчен тăватшар пус пуçтарнă та кăшман вăрри туяннă. Кĕркунне, пуçтарса кĕртсен курав йĕркеленĕ. 1933 çулта 11 пин помидор калчи çитĕнтернĕ вĕсем. Ăна пасарта сутнă та укçипе хĕрлĕ галстуксем, вĕренӳ хатĕрĕсем илнĕ.



*Евгений ТИМОФЕЕВ, 6 класс.*

## Пĕрремĕш вырăн тата премии

Нурăс шкулĕнче маттур ача нумай пулнă. Пултарулăха кружоксенче, тĕрлĕ конкурсра туптанă. 1932 çулта Нурăсри тата Кĕçĕн Кипекри ача-пăча коллективĕсене Шупашкара художество пултарулăхĕн смотрне янă. Хулана виçĕ талăк кайнă. Маршручĕ вăрăм – "Вăрнар–Канаш–Вăрмар–Тĕрлемес–Куславкка–Шупашкар". Конкурс Н.К. Крупская ячĕллĕ садра тăватă кун пынă. Пĕтĕмлетӳллĕ концерта Вăрнар районĕнчен Нурăс шкулĕнчи ушкăна çеç хутшăнма ирĕк панă. Александра Волковапа Борис Семеновăн вырăс ташшийĕ пурне те тĕлĕнтернĕ. Пĕрремĕш вырăна тухнă хайхискерсем. Уншăн коллектив премие – горн, параппан, ялав – тивĕçнĕ.

*Ирина КОШКИНА, 5 "а" класс.*

## Крупская посылкисем

1933 çулта Нурăс шкулне "Пионер сасси" хаçат редакцийĕн ĕçченĕсем килсе кайнă. Вырăнти пионер организацийĕн ĕçĕ-хĕлне икĕ страницăра çутатнă вĕсем. Кун хыççăн Анатолий Федорович Русаков аслă вожатăй, дружина совечĕн ертӳçи комсомол пленумĕнче "Шкулти пионер организацийĕн ĕçĕ çинчен" темăпа отчет тунă.

Çав çулах чи хастар пионерсем – Борис Семенов, Валя Кузнецова тата Иван Флегонтов Мускава Пĕтĕм Союзри пионерсен слетне çитсе курнă. Кунта вĕсем Надежда Константиновна Крупскаяпа тĕл пулнă. Кĕçех ун ятĕнчен çĕнĕ оборудованипе, кĕнекесемпе виçĕ посылка килнĕ шкула.

*Кристина АЛЕКСЕЕВА, 5 "а" класс.*

## Нурăсри пионер штабĕ

1929 çулта Нурăс салинчи пионер организацийĕсем шкул дружинисене пĕрлешнĕ. Пĕтĕм ĕç йĕркелӳçи Григорий Михайлович Шурнеев çамрăк вĕрентекен пулнă. Анатолий Федорович Русаков та вăйне-халне шеллемесĕр тăрăшнă. Каярахпа вăл шкул директорĕ те пулнă.

Вăрнар районĕнчи пионер организацийĕн тăвата тĕп штабĕ пулнă: Вăрнар, Кипек, Хутар, Нурăс. Юлашкине çак ял шкулĕсем кĕнĕ: Нурăс, Аçăмçырми, Авшак Элмен, Мăн Хирлеп, Ярмушка, Малтикас Ялтăра, Кăкшăм, Кăмпал, Кӳлхĕрри, Хурăн Кăкшăм, Хăмăш, Чăрăшкас Хирлеп. Ăна А.Ф. Русаков ертсе пынă. Пĕрремĕш пионерсем – Т.Еремина, М.Кондратьева, О.Горшкова, А.Ядаринкина, В.Рукавишников. Юлашки иккĕшĕ учитель пулса тăнă, чылай вăхăт тăван шкулта ĕçленĕ.

*Артем ГАВРИЛОВ, 7 класс.*

## 50-70-мĕш çулсенчи çĕнĕлĕхсем

50-70-мĕш çулсенче районти пионерсен пухăвĕсем Вăрнарта хальхи химзавод вырăнĕнче иртнĕ. 3-4-шар кун пурăннă кунта. Палаткăсем лартнă, кăвайт çинче апат пĕçернĕ. Тĕп мероприятисем çаксем пулнă: пионер организацийĕн ĕçĕпе паллаштарни, тĕрлĕ конкурс, ăмăрту, пултарулăх концерчĕ. Ĕç вĕресе тăнă.

Нурăс шкулĕн ушкăнĕ палăрсан Владимир Григорьевич Рукавишников музыка учителĕ шутсăр хĕпĕртенĕ. Вĕренекенĕсемшĕн савăнипе Лидия Алексеевна Еремина ăста педагог-йĕркелӳçĕ те куççульне тытса чарайман ун пек чухне.

70-мĕш çулсен пуçламăшĕнче пионер организацийĕсем Пĕтĕм союзри марша йышăннă. Ку "Пĕлӳсен тĕнчине" маршрута уçма, "Тăван çĕр-шывăм – СССР" экспедицие йĕркелеме май панă. Пĕлӳ çурчĕсенче çамрăк математиксен, физиксен, историксен, литераторсемпе корреспондентсен, географсен, натуралистсен, куçаруçăсемпе техниксен кружокĕсем уçăлма пуçланă. Кашниех ача кăмăлне тивĕçтернĕ.

*Вера ХАРИТОНОВА, 8 "а" класс.*

## "Украин польки" тата Хисеп Грамоти

1972 çулхи çу уйăхĕнче 7 "а" класс ачисем Римма Петровна Никифорова класс ертӳçипе тата Татьяна Павлова вожатăйпа пĕрле Шупашкарти парада хутшăннă. Вăрнар районĕнчи пĕртен-пĕр ушкăн пулнă вĕсем. В.Котомкин, Е.Молчанова, Н.Васильева, С.Иванова пионерсем хула халăхне хăйсен чаплă концерт программипе тыткăнланă.

1982 çулта районта художество пултарулăхĕн смотрĕ иртнĕ. Калинино шкулĕн коллективĕ Украина культурипе паллаштарнă. Т.Ефимова (Павлова) тăрăшнипе çавра çăкăр пĕçернĕ, ӳкерчĕксене пăхса костюмсем çĕленĕ, илем хатĕрĕсене шыраса тупнă çамрăксем. Педагогсемпе хор ертӳçи тимленипе Украина юррисене суйласа илнĕ, вĕреннĕ. Ытти шкула хыçа хăварса пĕрремĕш вырăна тухнă Калинино вĕренекенĕсем. Валерий Николаевăн "Украин польки" пурин кăмăлне те кайнă. Сцена çине темиçе хут та чĕнсе кăларнă каччăна. Аслă вожатăй вара ВЛКСМ Тĕп Комитечĕн Хисеп Грамотине тивĕçнĕ.

*Вероника ПОПОВА, 8 "а" класс.*

## Ĕнерхи тата паянхи

70-80-мĕш çулсенче "Зарница", "Орленок" çар вăййисем уйрăмах хаваслă иртнĕ. Калинино шкулĕнче ку енĕпе ачасемпе Александр Александрович Павлов отставкăри майор ĕçленĕ. Ытти чух çирĕп, хытă тыткалакан ар çын вăйăсенче йăлт улшăннă. Чăн-чăн çар кухни йĕркеленĕ, хăех палатка лартнă, лагере тирпейленĕ. Çамрăксем ун тĕслĕхĕпе вĕреннĕ, яланах малти вырăнсене çĕнсе илнĕ.

80-мĕш çулсен вĕçĕнче А.А. Павлов тивĕçлĕ канăва кайнă. Анчах вăл хатĕрленĕ çар ĕçĕн кабинечĕ чылай вăхăт пулăшу парса пынă яш-кĕрĕмпе хĕр упраса.

Калинино шкулĕнчи ОБЖ урокĕсене кунта вĕреннĕ Лев Николаевич Ефимов ертсе пырать паян. Çамрăк чухне вăл хăй те "Зарница", "Орленок" вăййисене хутшăнмасăр юлман.

1991 çулта В.И. Ленин ячĕллĕ Пĕтĕм союзри пионер организацийĕ арканнă.

*Анна РЖАНОВА, 7 класс.*

*Ольга ИВАНОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

АЛИКОВСКИЙ РАЙОН
1927
Тантăш
Элĕк районĕнче

# Пултарулăх хĕлхемĕ тапса тăрать

**Элĕк районĕ республикăн çурçĕр хĕвел тухăç енчен вырнаçнă. Вăл Вăрнар, Красноармейски, Муркаш, Етĕрне, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле районĕсемпе чиккĕленет. Администраци центрĕ – Элĕк сали – Шупашкартан 67 çухрăмра вырнаçнă.**

**Элĕк районне 1927 çулта йĕркеленĕ. Районти 12 ял тăрăхĕ 115 яла пĕрлештерет. Вĕсенче 18 пине яхăн çын пурăнать.**

Элĕк районĕ çĕр айĕнчи пурлăхпа тĕлĕнтерме пултараймасть. Унăн тĕп пуянлăхĕ – тĕрлĕ енлĕ пултарулă çынсем. Кунта республикипе кăна мар, тĕнчипе палăрнă наука ăсчахĕсем, çар çыннисем, вăрçă паттăрĕсем... Вĕсен хушшинче тăван чĕлхе пуянлăхне чăннипех туйса тăракан сăмах ăстисем мухтавлă вырăн йышăнаççĕ. Чăваш Республикин Гимнĕн сăмахĕсене пирĕн ентеш Илле Тукташ çырнă. Сурăмпала Выла шывĕсем хушшинче тăван тавралăх илемĕпе киленсе ӳснĕ Александр Галкин чăваш литература çӳçине тĕлĕнмелле сăвă-юптарусемпе пуянлатнă. «Сĕм-сĕм вăрман, Сурăм вăрман» юррине паянхи кун та Элĕксем кашни уяврах кăмăлтан юрлаççĕ. «Салампи» повесть авторĕ Александр Артемьев пирĕн тăрăхра кун çути курнă. Элĕк салипе юнашар вырнаçнă Синер ялĕнчен тухать Золотовсен йăхĕ. Николай Яковлевич Золотов – паллă журналист, поэт, публицист, фольклорист – хăй вăхăтĕнче чăваш писателĕсемпе журналисчĕсен «Канаш» Союзне йĕркелесе янă. Аркадий Иванович, Вениамин Тимофеевич, Анатолий Арсентьевич Золотовсем чăваш литературипе журналистикине аталатарас ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунă. Санкт-Петербург хулинче тĕпленнĕ Виталий Арсентьевич нумай çул хăйĕн пурнăçне çар тинĕс ĕçĕпе çыхăнтарнă, анчах аслă ăрури тăванĕсенчен куçнă сăмах хăвачĕ унра çĕнтерчĕ-çĕнтерчех. В.А. Золотов паян та çĕнĕ кĕнекисемпе савăнтарать, тăтăшах тăван ене килсе тĕл пулусем ирттерет.

Никифор Васанкка, Герасим Харлампьев, Петĕр Эйзин, Людмила Смолина... Элĕксем çыравçăсен йышĕпе мухтанма пултараççĕ. Паянхи кун Элĕк районĕнчен тухнă писательсемпе поэтсен шучĕ 40 яхăн. Вĕсенчен 15 çыравçă СССР писателĕсен, 5 – РФ писателĕсен, 6 – Чăваш писателĕсен Союзĕсен членĕсем. Александр Галкин чăваш халăх поэчĕ ята тивĕçнĕ, Александр Артемьев – чăваш халăх писателĕ.

Литература тĕрлĕ профессиллĕ çынсене пĕрлештерет. Акă А.А. Ананьевпа А.И. Иванов нумай çул Вутлан шкулĕнче ачасене пĕлӳ панă, иккĕшĕ те "Педагогика ĕçĕн ветеранĕ" ята тивĕçнĕ. Александр Ананьевич – хисеплĕ тавра пĕлӳçĕ, халăх академикĕ – 9 кĕнеке кăларнă. Хăйĕн ялĕн кун-çулне тĕпчесе унти паллă çынсем çинчен каласа парать, район историне тишкерет. Ананий Иванович хайланă сăввисемпе очеркĕсенче вара хамăрпа юнашар пурăнакан çынсенех курма пулать. Тĕлĕнмелле, анчах литература енне туртăнакансем хушшинче вĕрентекен йышлă пулнине палăртас килет. Чăваш Сурăм вăтам шкулĕнче вĕрентекен А.А. Михайлован пьеси тăрăх Чăваш академи драма театрĕ «Шăпа» спектакль лартрĕ. Н. А. Миронован «Амăш чĕри» поэмине вулакансем пысăка хурса хакларĕç. Чăваш чĕлхипе литература вĕрентекен А.Г. Петровăпа (Чăваш Сурăм шкулĕ) Л.А. Андреева (Мăн Ямаш шкулĕ), хăйсен ĕçĕсемпе республикăри конкурссенче пĕрре мар палăрчĕç.

Литература аталанăвĕ çинчен пирĕн иртнĕ вăхăтра калас килмест. Паянхи шкул ачисенчен пулас çыравçăсем тухас шанăç пур. Кашни çулах пирĕн тантăшсем республика тата район шайĕнче иртекен пултарулăх конкурсĕсенче палăраççĕ. Фантастика хайлавĕсен «Урхамахсем тăрас тапăртатаса» Интернет конкурсĕнче Екатерина Майоровăпа Татьяна Федорова (Юнтапа шкулĕ), Иван Ильдерпа Анна Матвеева (Мăн Ямаш шкулĕ), Елена Ильинапа (Вутлан шкулĕ), Виктория Павлова (Шĕмшеш шкулĕ), Татьяна Львова (Элĕк шулĕ) çĕнтерӳçĕсен йышне кĕчĕç.

Кăçал республикăри «Букварьтен – илемлĕ литературăна çити» пултарулăх конкурсĕнче элĕксен ĕçĕсене пысăка хурса хакланă. «Поэзи» секцийĕнче Чăваш Сурăм шкулĕнчи Екатерина Иванова мала тухрĕ. Проза кăмăллакансем хушшинче Мăн Вылă шкулĕнчи Инесса Шашкинăна çитекен пулмарĕ. Шкулсенче ачасен пултарулăхне аталантарас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ. Тĕслĕхрен, Чăваш халăх поэчĕ Ухсай Яккăвĕ çуралнăранпа 100 çул çитнине халалласа районти вĕренекенсем хушшинче «Пултарулăх çăл куçĕсем» поэзи фестивалĕ иртрĕ. Çамрăк поэтсем «Чи лайăх автор сăвви" номинацире тупăшрĕç.

*Аня ПЛАТОНОВĂПА*
*Лена ЛЕОНТЬЕВА,*
*9-мĕш "б" класс.*

Элĕк шкулĕ.

# Çитĕнӳсем тăрăшсан кăна пулаççĕ

**Элĕк шкулĕсем юлашки çулсенче чылай çĕнелчĕç, хальхи йышши техника хатĕрĕсемпе пуянланчĕç. Паян кашни ултă ачана пĕр компьютер тивĕçет (республикипе – сакăр вĕренекене). Районти 13 шкулта икĕ пин те икçĕре яхăн ача ăс пухать. Тăватă тĕп (база) шкулĕ пирĕн, виçĕ ача сачĕ, пĕлӳ çурчĕсем çумĕнче шкул çулне çитменнисен ушкăнĕсем уçăлчĕç. Малашлăха мĕнлерех ĕмĕтсемпе пăхаççĕ-ха элĕксем? Çакна пĕлес тесе юнкорсем Элĕк район администрацийĕн вĕренӳ, социаллă аталану, çамрăксен политикин тата спорт пайĕн пуçлăхĕпе – Эдуард Владимирович Николаевпа – тĕл пулса калаçрĕç.**

**Ыйту: Эдуард Владимирович, кĕçех тăххăрмĕшсемпе вун пĕрмĕш классен хĕрӳ тапхăр пуçланать. Мĕнле çĕнĕлĕхсем кĕтеççĕ вĕсене?**

**Э.В.:** Пĕрлĕхлĕ патшалăх экзаменĕсем кăçал ытти çулсенчен çирĕпрех иртĕç. Экзамен вăхăтĕнче ачасем телефонпа е ытти мелпе усă ан курччăр тесе хытăрах тĕрĕслĕпĕр. Йĕркене пăсакансен ĕçĕсене çийĕнчех тупса палăртма çĕнĕ мелсем çителĕклĕ. 9-мĕш классен те çĕнĕлĕхсем пур. Унччен ĕçсене районтах тĕрĕсленĕ пулсан, халĕ Шупашкара илсе каятпăр.

Тĕрĕссипе, 10-мĕш класа малашне аслă вĕренӳ заведенийĕсене вĕренме кĕме тĕллев тытакан ачасен каймалла. Кунта çакна уйăрммăн палăртас килет, колледж-техникумсене япăх вĕренекенсем каяççĕ тесе калас килмест. Вĕсем кĕске вăхăтрах алла пĕрпĕр специальность илеççĕ. Мал ĕмĕтлисен хыççăн хăйсен пĕлĕвне аслă вĕренӳ заведенийĕсенче ӳстерме пултараççĕ, тăрăшуллисене тӳрех 3-мĕш курса илеççĕ. Вĕреннĕ вăхăтрах теори пĕлĕвне практикăпа çирĕплетсе пыраççĕ. Паянхи ĕç рынокĕ рабочи специальноçĕсене ытларах ыйтать. Пысăк квалификациллĕ слесарь-токарьсем çитмеççĕ. Вĕсен ĕç укçи те пĕчĕк мар.

**Ыйту: 9-мĕш класс хыççăн ачасенчен ытларахăшĕ хулана туха кайсан вĕренекенсен шучĕ чакас хăрушлăх çук-и? Кун пек чухне шкул та хупăнма пултарать-çке.**

**Э.В.:** Çирĕппĕнех калама пултаратăп: малашне шкулсем хупăнмĕç. Паллах, ачасен шучĕ чакма пултарать, анчах ку пысăк хăрушлăх мар. Чи малтан пирĕн вĕренекенсен пуласлăхĕ çинчен шухăшламалла. 10-11-мĕш классенче ача йĕркеллĕ вĕренмесен, пĕрлĕхлĕ экзамен витĕр тухаймасан – пуриншĕн те пысăк çухату.

**Ыйту: Экзаменсенчен мĕн кĕтетĕр? Медалистсем тухас шанăç пур-и?**

**Э.В.:** Иртнĕ çул пирĕн кăтартусем республика шайĕнчен чакмарĕç. Кăçал та лайăх пуласса шанас килет. Медалистсем тухасса кĕтетпĕр. Паллах, пур предмета та «5» паллăлăх пĕлме йывăр. Чи кирли – ачан вĕренме ăнтăлмалла, хăйне пур енлĕн аталантармалла. Аслă классенче профильлĕ майпа вĕренмелле, суйласа илнĕ дисциплинăсемпе тарăн пĕлӳшĕн тăрăшмалла. Çак тĕллевпе ĕнтĕ шкулсенче профильлĕ классем уçатпăр.

**Ыйту: Шкул пĕтерсен çамрăксем пысăк хуласене каяççĕ. Пултаруллă яшсемпе хĕрсене каялла района тавăрма майсем пур-и? Вĕсене ĕçпе тивĕçтерме пултаратăр-и?**

**Э.В.:** Çамрăк учительсене хавхалантарма тăрăшатпăр. Ĕçлеме пуçласанах вĕсем укça (халăхра ăна «подъемные» теççĕ) илеççĕ. Пултаруллă çамрăк специалистсем валли стипендисем, грантсем пур. Унсăр пуçне, ĕç укçи çумне хушса тӳлетпĕр. Шел те, кунта шухăшлаттараканни те пур. Çамрăксем ĕçлесшĕнех мар. Вĕсене лайăххи паянах тата нумай кирлĕ.

**Ыйту: Кĕçех каникул пуçланать. Ачасем çуллахи вăхăта усăллă ирттерччĕр тесе мĕнле ĕçсем тăватăр?**

**Э.В.:** 11 шкул çумĕнче лагерьсем ĕçлĕç. Икĕ шкул кăçал ачасене йышăнаймĕ. Питĕшкассинчи тата Мăн Вылăри пĕлӳ çурчĕсен тăррисене улăштарма палăртнă. Юсав ĕçĕсем çитес вăхăтра пуçланаççĕ.

**Ыйту: Çуллахи вăхăтра ĕçлеме кăмăл тăвакан ачасем те тупăнаççĕ. Ку ĕçе мĕнле йĕркеленĕ?**

**Э.В.:** Ку ыйтăва районти ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă татса паратпăр. Çул çитмен çамрăксенчен бригада йĕркелетпĕр. Çапла майпа ачасем укça ĕçлесе илме пултараççĕ.

**Ыйту: Кăçалхи вĕренӳ çулне пĕтĕмлетсе çĕнĕ çула мĕнле хатĕрленетĕр?**

**Э.В.:** Район администрацийĕ шкулсене пысăк тимлĕх уйăрать. Чăваш Сурăм, Вутлан, Ямаш шкул тăррисене тĕппипе улăштартăмăр. Тавăт шкулĕнче пластик кантăксем лартрăмăр. 5-6 çулти ачасем пурте садике е шкул çумĕнчи хатĕрленӳ ушкăнĕсене çӳреççĕ. Килес çул 3 çултисене те садика вырнаçтармалла.



Çак тĕллевпе Вутлан шкулĕ çумĕнче садик уçрăмăр, Элĕк салинчи «Хĕвел» садикра хушма ушкăн ачасене йышăнма пуçларĕ. Çитес вăхăтра Ямаш шкулĕнче ачасене кĕске вăхăтлăха йышăнакан ушкăн йĕркелеме палăртатпăр.

Паянхи кун пире хавхалантараканни тата та пур. 1-мĕш класа килекен ачасен йышĕ пĕчĕк мар, районта вĕренекенсен шучĕ ытти çулпа танлаштарсан палăрмаллах ӳсет.

Районти малалла талпăнса ĕçлекен шкулсене асăнса хăварас килет. Элĕк, Юнтапа, Питĕшкасси, Тавăт шкулĕсем пур енлĕн палăрса тăраççĕ. Ураскилт шкулĕнчи Алевтина Федоровна Лаврентьева кăçал республикăри «Чи лайăх класс ертӳçи» конкурсра çĕнтерчĕ.

**Ыйту: Эдуард Владимирович, хăвăр шкулта вĕреннĕ кунсене манман пулĕ-ха...**

**Э.В.:** Шкул саманчĕсем, паллах, асран тухмаççĕ. Эпĕ яланах хамăр класс ертӳçине Маргарита Алексеевна Михайловăна аса илетĕп. Вăл паянхи кун та ĕçлет. 9 çул эпир унпа пулнă. Çак хушăра вăл пирĕн çине пĕрре те сас хăпартман. Апла пулин те эпир ăна яланах итленĕ.

**Ыйту: Эсир хăвăр дневникра мĕнлерех паллăсем пулнине ас тăватăр-и? Паянхи кун вăя кĕрсе пыракан электрон дневниксем пирки те Сирĕн шухăша пĕлес килет.**

**Э.В.:** Электрон дневника питĕ меллĕ тесе шутлатăп. Ывăл шкулта вĕреннĕ май эпĕ час-часах ăна уçса пăхатăп. Малашлăхĕ пур унăн. Эпир шкулта вĕреннĕ чух, паллах, хут дневниксем кăна пулнă. Суймасăр калатăп, «иккĕ» паллă пулман, черчениле «виççĕ» илнине пытармастăп. Уншăн эпĕ вĕрентекене кӳренместĕп, вăл манран çирĕпрех ыйтасшăн пулнă пулĕ тетĕп.

Шкул çулĕсем – чи асамлă вăхăтсем. Эпĕ Чăваш Сурăм шкулĕнче пĕлӳ пухнă. Чи юратнă предмет истори пулнă. Ман шутпа, тăрăшса ĕçлесен кăна çын çитĕнӳсем тума пултарать.

**Пирĕн ыйтусене хуравлама кăмăл тунăшăн тав Сире. Ăнăçусем сунатпăр.**

*Марина ТИМОФЕЕВĂПА*
*Марина ПОРФИРЬЕВА,*
*Элĕк шкулĕн 11-мĕш класс вĕренекенĕсем, калаçнă.*

## Çитӗнӳ хыççӑн çитӗнӳ



Манӑн сире хамӑр шкулти çамрӑк, çулне кура мар хастар та пултаруллӑ вӗрентекенпе паллаштарас килет. Кӑçал вӑл Раççей шайӗнчи конкурсра палӑрма та ӗлкӗрчӗ, районти "Чи лайӑх вӗрентекен" ята та тивӗçрӗ.

Асамат ялӗнче çуралса ӳснӗ Марина Владимировна Федорова 2009 çулта педагогика университетӗнчен вӗренсе тухсан Ураскилт шкулӗнче ӗçлеме тытӑннӑ, 2-11-мӗш классене акӑлчан чӗлхи вӗрентнӗ. Пӗлтӗр вӑл пирӗн Тавӑт шкулне килчӗ.

– Марина Владимировна, вӗренӳ çулӗ вӗçленсе пырать. Сирӗншӗн ку çул мӗнпе асра юлчӗ?

– Ку çул маншӑн ӑнӑçлӑ пулчӗ. Нарӑс уйӑхӗнче Мускавра пулма тӳр килчӗ. Раççей шайӗнчи "Эпӗ политик пулсан вӗренӳшӗн мӗн тӑвӑттӑм?" конкурсра эссе çырса иккӗмӗш вырӑн çӗнсе илнӗшӗн хутшӑнма тивӗçрӗм унта. Дипломне илме Мускава чӗнчӗç. Ку маншӑн пысӑк çитӗнӳ пулчӗ.

– Пуш уйӑхӗнче эсир районти "Çулталӑкри чи лайӑх вӗрентекен" конкурсра пӗрремӗш вырӑна тухрӑр. Мӗнлерех кӑмӑлсемпе таврӑнтӑр унтан?

– Ку конкусра хама валли çӗнни нумай илме пултартӑм. Уçӑ урок, методика семинарӗ, ашшӗ-амӑшӗн пухӑвне ирттертӗмӗр. Пӗрремӗш вырӑна тухнӑран ака уйӑхӗнче район чысне республика шайӗнчи ӑмӑртура хӳтӗлерӗм.

– Сирӗн малашнехи тӗллевсем çинчен те пӗлес килет пирӗн...

– Вӗрентекенӗн пысӑк çитӗнӗвӗ – ачасен пӗлӳ шайӗ пысӑк пулни, вӗсем çӗнӗрен çӗнӗ ӳсӗмсем туни. Вӗренекенсем çулсеренех пысӑк çитӗнӗвӗсемпе савӑнтарччӑр. Çавӑншӑн тӑрӑшатпӑр.

– Тавтапуç калаçушӑн.

***Ирина СТЕПАНОВА, 8-мӗш класс, калаçнӑ.***

Тавӑт шкулӗ.

## Электрон журнал хутлине хӗсет



Элӗк шкулӗ Чӑваш Республикинче электрон журналсемпе усӑ курма пуçлакансенчен пӗри пулчӗ. Малтанхи вӑхӑтра вӗрентекенсем хут журнал та çырса пыратчӗç. Паян кашни кабинетра тенӗ пекех вӗрентекен умӗнче компьютер пур. Журнал страницисене кнопка пусса уçса, мӗн кирлине пӗтӗмпех паллӑ туса пырать. Çӗнӗлӗхӗн лайӑх енӗсене ачасем те, вӗрентекенсем те, ашшӗ-амӑшӗ те палӑртаççӗ. Çакна ятарлӑ ыйтӑм пӗтӗмлетӗвӗсем те кӑтартаççӗ. «Шкулта электрон журналсем кирлӗ-и?» ыйту çине пирӗн шкулти 2074 çын хуравланӑ, вӗсенчен 67 процентчӗ (1386 çын) кирлӗ тенӗ, 30 проценчӗ (617 çын) хирӗç пулнине палӑртнӑ. 3 процентчӗ (71 çын) хальлӗ хе иккӗленет.

Электрон журнал пирки хамӑр шухӑша та каласа хӑварас килет. Атте-анне шкула килмесӗрех Интернет урлӑ Netschool сервера кӗрсе ачасен вӗренӗвӗпе паллашма пултараççӗ. Унченхи хут журналта урокра пӗр оценка çеç лартма май пулнӑ пулсан халӗ хӑрасах темиçе вырнаçать, кашни палли мӗншӗн пулни те уçӑмлӑ. Журналпа ӗçлеме вӗрентекенӗн çеç ирӗк пур. Вӑл унта ятарлӑ парольпе кӗрет.

Çитес вӑхӑтра районти пур шкул та çак йӗркепе ӗçлеме пуçласси паллӑ.

***Егор ПЕТУХОВ, Володя ИВАНОВ, 6-мӗш «б» класс.***

Элӗк шкулӗ.

## Район пуçлӑхӗн стипендиачӗ



Вутланти тӗп шкулти 9-мӗш класра вӗренекен Виктория Трофимова питӗ пултаруллӑ, тӑрӑшуллӑ хӗр ача. Вӗренӳре "5" паллӑпа çеç ӗлкӗрсе пырать. Пушӑ вӑхӑтра кӗнеке вулама юратать. Тӗрлӗ конкурсра, мероприятире те палӑрать. Халӗ вӑл шкул республикин Президенчӗ. Ӑна юлташӗсем, вӗренекенӗсем, ашшӗ-амӑшӗ хавхалантарса пыраççӗ. Шкулта вӑл пуриншӗн те тӗслӗх.

2011-2012 вӗренӳ çулӗнче Виктория районта иртнӗ "Çулталӑкри чи лайӑх вӗренекен" конкурса хутшӑнчӗ. Кунта та вӑл хӑй питӗ пултаруллӑ пулнине кӑтартрӗ. Чи нумай балл пухса "Çулталӑк вӗренекенӗ" ята çӗнсе илчӗ. Халӗ вӑл Элӗк район администрацийӗн пуçлӑхӗн стипендине илсе тӑрать. Вика кӑçал тӑххӑрмӗш класс пӗтерет. Экзаменсене ӑнӑçлӑ тытса вӗренме кайма ӗмӗтленет. Унӑн ӗмӗчӗ – тухтӑр пуласси.

Виктория шкулти, районти тата республикӑри тӗрлӗ олимпиадӑпа конкурссене хутшӑнать, малти вырӑнсене те çӗнсе илет. Иртнӗ вӗренӳ çулӗнче районта пулнӑ чӑваш чӗлхипе литератури олимпиадинче 1-мӗш вырӑн йышӑнчӗ. Тӗпчев ӗçӗсен конкурсӗсене те яланах хаваспа хутшӑнать.

Вика юрлама тата ташлама ӑста. Хӑй клуб сцени çинче пӗрремӗш хут тухнине те ас тӑвать. Уроксем пӗтсен вӑл ялти Культура çуртне васкать. Ю. Пантелеймонов ертсе пыракан искусствӑсен шкулне пиллӗкмӗш класранпах çӳрет. "Хунав" ушкӑнпа вӗсем тӗрлӗ смотр-конкурса хутшӑнаççӗ, дипломсем çӗнсе илеççӗ. Уйрӑммӑн юрласа та Хисеп хучӗсем илме тивӗç пулнӑ Вика. Хӑйне сцена çинче тытма пӗлет вӑл, илемлӗ сассипе тыткӑнлать.

Спортпа туслӑ пулмаллине те яланах асра тытать. Физкультура урокӗсене чӑтӑмсӑрран кӗтет. Уйрӑмах ӑна баскетбол вӑййи килӗшет. Виктория районти ӑмӑртусене те çӳрет. Баскетбол выляса шкул команди районта яланах малти вырӑна тухать. Кунта Викӑн тӳпи те пур. Пиллӗкмӗш класранпах районта иртекен "Зарница" çар вӑййине хутшӑнать. Кашнинчех ӑна отряд командирӗ пулма шанаççӗ. Вика ертсе пыракан отряд икӗ хутчен районта 1-мӗш вырӑна тухса республикӑри "Зарница" вӑййине хутшӑнчӗ.

Вика шкулта çеç мар, килте те ӗççӗр лармасть. Пушӑ вӑхӑтра çекӗлпе çыхма юратать. Унӑн ӗçӗсемпе районти куравсенче те паллашма пулать.

***Александра АФАНАСЬЕВА, Ольга АНДРЕЕВА.***

Вутлан шкулӗ.

## "Республикӑри чи лайӑх класс ертӳçи" – Ураскилт шкулӗнче

Пултаруллӑ вӗрентекен нумай Ураскилт шкулӗнче. Вӗсенчен пӗри – Алевтина Федоровна Лаврентьева. Вӑл 6-мӗш класс ертӳçи, ачасене истори, общество, географи вӗрентет. Питӗ кӑмӑллӑ та ырӑ чунлӑ çын, ачасене ӑнланакан вӗрентекен. Çамрӑк учитель ыттисене хӑй патне туртма, кашнипе пӗр чӗлхе тупма пӗлет. Турӑ пани пур унра, тӑрӑшуллӑ, типтерлӗ, анлӑ тавра курӑмлӑ. Ӑна пур класс ачи те, шкултан вӗренсе тухнисем те юратаççӗ. Çакӑ ӗнтӗ вӑл вӗрентекенӗн телейӗ.

Кӑçалхи ака уйӑхӗнче Алевтина Лаврентьева республикӑра иртнӗ "Çулталӑкри чи лайӑх класс ертӳçи" конкурса хутшӑнса хӑйӗн пултарулӑхне туллин кӑтартма пултарчӗ. Чи ӑслӑ-тӑнлӑ, хастар учительсем хушшинче çӗнтерчӗ. "Республикӑри 2012 çулхи чи лайӑх класс ертӳçи" ята тивӗçрӗ. Эпир, Ураскилт шкулӗнче вӗренекенсем, Алевтина Федоровнӑпа пӗрле савӑнатпӑр, унпа мухтанатпӑр, ӑна тата пысӑкрах çитӗнӳсем тума ӑнӑçу сунатпӑр. Пирӗн вӗрентекенӗн çитӗнӗвӗ ытти учителе хавхалантарать, çӗнӗ ӳсӗмсем тума хистет.

***Евгения ФЕДОРОВА, 8-мӗш класс.***

Ураскилт шкулӗ.



## Юнтапа шкулӗ – Раççейри Хисеп кӗнекинче

Аслӑ çул хӗрринче вырнаçнӑ Юнтапари пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вӑтам шкул. Паян кунта Элӗк тата Вӑрнар районӗсенчи вун ултӑ ялтан 215 ача çӳрет. Вӗренекенсене икӗ автобус турттарать. Шкулӗ çӗнӗ, 2006 çулта хута кайнӑскер. Кабинетсенче ку чухнехи вӗрентӳ хатӗрӗсем. Çирӗп те тарӑн пӗлӳ илме пур май та туса панӑ.

2008 çулта Юнтапа шкулне Пӗтӗм Раççейри Хисеп кӗнекине кӗртнӗ. Вӗрентекенсен коллективне А.П Кондратьев ӑнӑçлӑ ертсе пырать. Вӗренекенсен сывлӑхне çирӗплетессине уйрӑмах пысӑк тимлӗх уйӑрать. Шкул вӑййӗпе тунӑ хоккей курупки ачасене сивӗ хӗл кунӗсенче те хӑй патне пухать. Н.В. Иванова, Е.А. Александрова, А.П. Кондратьев ӑста ертсе пынипе вӗренекенсем тӗрлӗ спорт ӑмӑртӑвӗнче малти вырӑнсене йышӑнаççӗ. Акӑ 11-мӗш класри Станислав Нестеров тӑршшӗне сикессипе, ал вӑйне виçессипе, теннис, шахмат ӑмӑртӑвӗсенче районта 1-мӗш вырӑнсене çӗнсе илме пултарчӗ, республикӑри кӑтартӑвӗсем те савӑнтараççӗ.

Ачасем вӗренӳре те маттур. Районти, республикӑри тӗрлӗ мероприятие вӗренекенсем тӑтӑшах хутшӑнаççӗ, кӑтартӑвӗсемпе савӑнтараççӗ, республика шайӗнче иртекен олимпиадӑсенче те палӑраççӗ. Уйрӑмах Таня Федоровӑна, Евгений Павлова, Анастасия Никандровӑна палӑртма кӑмӑллӑ.

"Çулталӑкри чи лайӑх вӗренекен" конкурсра кӑçал 10-мӗш класри Таня Федорова «Хавхалану» номинацире çӗнтерчӗ.

Вӗрентекенсене те ырӑпа асӑнмалла. Вӗсем те учительсем хушшинче иртекен тӗрлӗ конкурса хутшӑнма тӑрӑшаççӗ. "Çулталӑкри чи лайӑх вӗрентекен" район конкурсӗнче вырӑс чӗлхипе литература учителӗ С.А. Арсентьева «Чӗреме ачасене парнелетӗп» номинацире пӗрремӗш вырӑн йышӑнчӗ.

Манӑн аттепе анне те çак шкултах ӗçлеççӗ. Вӗсем хӑйсен ӗçне юратса, чунтан парӑнса туса пыраççӗ.

***Алена КОНДРАТЬЕВА, 6-мӗш класс.***

Юнтапа шкулӗ.

## Хура тинӗс илӗртет

Хура тинӗс хӗррине кайса курма пурин те май килмест. Иртнӗ çул çемьепе унта çитсе килтӗмӗр. Çулӗ вӑрӑм, икӗ талӑк кайрӑмӑр. Тӗрлӗ хулана кӗрсе тухрӑмӑр. Пӗрре мар çуллӗ тусем хушшипе иртрӗмӗр, сиплӗ шывне те ас тиврӗмӗр.

Палӑртнӑ вырӑна ир енне çитрӗмӗр. Савӑнӑça пытараймасӑр тӳрех тинӗс хӗррине ыткӑнтӑм. Шывӗ çав тери тӑрӑ, кӑшт тӑварлӑрах та. Кимӗпе ярӑннӑ чух дельфин ишнине те куртӑмӑр. Хулари аквапарка, океанариума та çитсе килтӗмӗр.

Тӑван киле таврӑннӑ чух асӑнмалӑх сувенирсем туянтӑмӑр, Мамай сӑрчӗпе паллашрӑмӑр.

Çул çӳрев нумайлӑха асра юлӗ.

***Анна УДИВАНОВА.***

Шӗмшеш шкулӗ.

# Винтикпа Шпунтик – чи юратнӑ сӑнарсем



Юлашки вӑхӑтра ачасем кӗнеке вуламаҫҫӗ тенине час-часах илтме пулать. Ҫак шухӑша хирӗҫлесе манӑн сире хамӑн тантӑшпа – Элӗкри вӑтам шкулта 4-мӗш «б» класра вӗренекен Настя Дубининӑпа – паллаштарас килет. Настя шкулта «5» паллӑсемпе кӑна вӗренет. Уроксем хыҫҫӑн районти искусствосен шкулне ташлама ҫӳрет, хыҫҫӑн пӗчӗк шӑллӗне пӑхать. Шкулти тата класри пӗр мероприяти те унсӑр иртмест пулӗ. Е ташӑпа, е ҫӗнӗ юрӑпа, е пӗр-пӗр поэт сӑввине илемлӗ вуласса тӗлӗнтерет вӑл пире. Пушӑ вӑхӑт ҫук та пулӗ унӑн, мӗнле ӗлкӗрет-ха вӑл пур ҫӗре те? Кунта нимӗнле вӑрттӑнлӑх та ҫук иккен. Настя пӗтӗмпех чун туртнипе тӑвать.

Манӑн тусӑм кӗнеке вулама юратать. Ҫавӑнпах пулӗ кӑҫал районти ача-пӑча библиотеки ирттернӗ конкурса та хаваслах хутшӑнчӗ. Кунта чи лайӑх вулакана палӑртрӗҫ. Ҫулталӑкра 303 кӗнеке вуласа Настя районта ҫӗнтерӳҫӗ пулса тӑчӗ. Унӑн ҫитӗнӗвне республикӑри конкурсра та пысӑка хурса хакларӗҫ. «Чи вулама юратакан вулакан» («Самый читающий читатель») номинацире ҫӗнтерчӗ вӑл.

Ҫӗнӗ кӗнекесене уйрӑмах чӑтӑмсӑррӑн кӗтет Настя. Чӑваш кӗнеке издательстви 2010 ҫулта кӑларнисене пурне те вуласа тухнӑ. Хӑй вуланӑ хыҫҫӑн вӗсемпе тус-тантӑшне те паллаштарать. Юмахсем, ачасен пурнӑҫне сӑнлакан калавсем тыткӑнлаҫҫӗ ӑна. Вырӑс писателӗсенчен Николай Носов килӗшнине пытармасть. Незнайка тата Винтикпа Шпунтик – унӑн юратнӑ сӑнарӗсем. Чӑваш юмахӗсене те алран ямасть. Иван Яковлев калавӗсене халӗ те килӗштерсе вулать, вӗсем тӑрӑх ӳкерчӗксем тӑвать. Хӑш чух хӑйӗн те ҫырас туртӑм ҫуралать пулас. Литература урокӗнче пире «Хыт кукар патшапа тарҫи» юмахӗпе паллаштарчӗ.

Кӗнеке – пӗлӳ ҫӑл куҫӗ теҫҫӗ. Унпа туслӑ пулни вӗренӳре те пысӑк пулӑшу панине Настя ӗҫӗпе, ҫитӗнӗвӗсемпе ҫирӗплетсе парать. Иккӗмӗш ҫул ӗнтӗ вӑл районти кӗҫӗн классем хушшинче иртекен интеллектуалсен вӑййинче вырӑс литературипе ҫӗнтерет. Эпӗ хамӑн юлташӑн ҫитӗнӗвӗсемпе мухтанатӑп, унран юлас мар тесе тӑрӑшатӑп.

*Юля ЛЕОНТЬЕВА, 4-мӗш «б» класс.*

Элӗк шкулӗ.

# Пултаруллӑ вӗрентекен, сӑвӑҫ...



Чӑвашра пултаруллӑ, ӑста, унпа пӗрлех ырӑ кӑмӑллӑ ҫын нумай, анчах та яланхи пӗрпеклӗхпе иртсе пыракан кунсенче эпир вӗсене тӳрех асӑрхаймастпӑр та пулӗ. Вӗсен ӗҫӗ-хӗлӗ, ӑсталӑхӗ, пӗлӗвӗ, ӗҫченлӗхӗ хӑйсем ҫине урӑхла куҫпа пӑхма хистет, ҫав ҫынна тата унӑн ӗҫне хисепе кӑларать.

Мӑн Вылӑ шкулӗнче кӗҫӗн классене вӗрентекен Любовь Аркадьевна Шашкина ырӑ кӑмӑллӑ, тараватлӑ, пысӑк опытлӑ учитель. Ачасене пӗлӳпе воспитани парас ӗҫре чылай ҫул вӑй хурать. Ҫавӑн пекех директорӑн воспитани енӗпе ӗҫлекен ҫумӗ те вӑл.

Любовь Аркадьевна 1971 ҫулхине Ураскилт ялӗнче учительсен ҫемйинче ҫуралнӑ. Пӗчӗкренех вӗрентекен пулма ӗмӗтленнӗскер пурнӑҫне ҫав профессипех ҫыхӑнтарнӑ. Чӑваш патшалӑх педагогика университетӗнче вӗреннӗ.

Любовь Аркадьевна пултарулӑхӗ тӗрлӗ енлӗ, вӑл сӑвӑсем ҫырма юратать. Юрату, пурнӑҫ ҫинчен шухӑша яраҫҫӗ вӗсем, чӗр чунсем ҫинчен ҫырнисем те пур. Нумаях пулмасть унӑн "Ӗмӗтсем, ӗмӗтсем" ятлӑ сӑвӑсен пухху пичетленсе тухрӗ.

Любовь Шашкина темиҫе ҫул каяллах Мӑн Вылӑ ялӗн гимнне ҫырчӗ. Нумаях пулмасть "Тӑван ен" юрӑ кӗвӗлерӗ. Юрлама та ӑста. Ахальтен мар ӑна Чӑваш Республикин писателӗсен союзне те илнӗ.

Улми йывӑҫҫинчен аякка ӳкмест теҫҫӗ. Шашкинсен хӗрӗ Инесса та амӑшӗнчен юлмасть – вӑл та халех ҫырас пултарулӑхӗпе палӑрать. Республикӑри "Букварьтен – илемлӗ литературӑна ҫити" конкурса кӑҫал 1-мӗш вырӑна ҫӗнсе илчӗ. Унӑн прозӑлла хайлавне жюри членӗсем пысӑк хак панӑ.

*Арина ИВАНОВА,*
*7-мӗш класс.*

Мӑн Вылӑ шкулӗ.

# Тени хӗрӗ – паллӑ артистка

**Пӗчӗк чухне кашни ача артист пулма ӗмӗтленет. Мӗнпе тыткӑнлать ӑна сцена искусстви? Пуринчен те илӗртӳллӗрех, асамлӑрах, ӑстарах пулас тени-ши? Ҫулсем иртнӗҫемӗн хамӑрӑн шухӑш-кӑмӑл пирки тунсӑхлӑн аса илетпӗр, вӑл пурнӑҫа кӗреймен пулин те ӳпкелешместпӗр. Пурте артист пулма ҫуралмаҫҫӗ-ҫке.**



Пирӗн Элӗк районӗн телейлӗ хӗрӗсемпе каччисем пирки мар ку сӑмахсем. Кармалта ҫуралса ӳснӗ Елизавета Хрисанфова, Анаткас Ҫулавӑҫ каччи Арсений Дмитриев тата Тукач хӗрӗ Надежда Кузьмина хӑйсен ача чухнехи ӗмӗчӗсене пурнӑҫа кӗртме пултарнӑ. Ҫавӑнпа та эпир вӗсене ӑмсанатпӑр, вӗсемпех мухтанатпӑр.

Чӑваш сценин хальхи паллӑ ӑсти Елизавета Геннадьевна 1980 ҫулта ҫуралнӑ, унӑн ашшӗ те хӑй вӑхӑтӗнче Свердловскра режиссера вӗреннӗ. Амӑшӗ, ялти чи илемлӗ хӗр, юрӑ ӑсти пулнӑ. Вӗсен пултарулӑхӗ ачисене куҫнӑ та ӗнтӗ. Лиза ҫемьери пиллӗкмӗш ача, чи кӗҫӗнни. Ӑна ашшӗпе амӑшӗ яланах "ачашши" тесе чӗннӗ. Аслисем: Светлана, Сергей, Людмила, Лариса уншӑн пысӑк хӳтӗлӗх пулнӑ.

Мӗнпе палӑрса юлнӑ-ха пӗчӗк Лиза ял ҫыннисен асӗнче? Урампа вирхӗнсе пыракан хӗр ачана никам та пулас артистка тесе пӑхман. Тӑрмаланчӑк ҫӳҫ-пуҫлӑ, арҫын ача тумне килӗштернӗ хӗр пӗрчине пурте пӗчӗк каччӑ вырӑнне йышӑннӑ. Яланах карта тӑррине, йывӑҫ ҫине хӑпара-хӑпара аннӑ вӑл. Ҫавӑнпа кӗпи те час-часах ҫӗтӗлнӗ.

Аппӑшӗ аса илнӗ тӑрӑх, вӗсен аякри тӑванӗ сем, ашшӗн шӑллӗпе мӑшӑрӗ, Лизӑна курсан ӑна арҫын ача тумӗ парнеленӗ. Хӑйсен йӑнӑшне вӗсем килтисем Лиза тесе чӗннине илтсен ҫеҫ ӑнланса илнӗ.

Хӑйне арҫын ача евӗр тытнӑ пулсан та Лиза ытти хӗр пекех илемлӗ тумтире юратнӑ. Амӑшӗн чечеклӗ кӗписене тӑхӑннӑ та пилӗкне резинкӑпа ҫыхса кӗскетнӗ. Аслӑ аппӑшӗсен ҫуллӗ кӗлеллӗ пушмакӗсене тӑхӑнса шаклаттарса ҫӳреме кӑмӑлланӑ.

Пӗрремӗш вӗрентекенӗ Людмила Павловна Павлова вара Лиза пӗчӗк чухнех ҫав тери тӑрӑшуллӑ та ӗҫчен пулнине пӗлтерчӗ. Амӑшӗ фермӑра ӗҫленӗрен уроксем хыҫҫӑн яланах ӑна пулӑшма чупнӑ. Урoксенче те, класс тулашӗнчи ӗҫсенче те малтисен ретӗнче пынӑ. Юрӑ-ташӑпа та туслӑ пулнӑ. Килте кӑна мар, ӗне черетне кайсан та аслисем Лиза "концертне" курса савӑннӑ.

Вӑхӑт иртнӗҫемӗн чарусӑр "арҫын ача" Кӗл пике евӗр чиперккене ҫаврӑнать. Культура ҫуртӗнче иртекен концертсенче куракансене таланчӗпе те, кӗлетке, сӑн-пит илемӗпе те тыткӑна илет. Лиза сцена ҫине тухса юрӑ хыҫҫӑн юрӑ шӑрантарать, куракансем кашнинчех тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ, ҫыххи-ҫыххипе чечек парнелеҫҫӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн хавасла хӗр ачан артист пулас ӗмӗт ҫуралать те.

Лизӑн йыснӑшӗ, культура ҫуртӗнче ӗҫленӗ май, илемлӗ хӗре районта иртекен "Чӑваш пики" конкурса хутшӑнма ыйтать. Аппӑшӗ, Людмила, пулӑшнипе хӗр пӗрчи хатӗрленме тытӑнать. Анчах тӗрӗ тӗрлессипе те ӑмӑрту пуласине пӗлсен хӑраса ӳкет. Аппӑшӗ вара ӑна тимлесех тӗрӗ тӗрлеме вӗрентет. Ҫапла вара районти конкурсра Лиза малтисен йышне лекет.

Шкул хыҫҫӑн тӳрех Мускаври М.Щепкин ячӗллӗ театр училищине вӗренме кӗрет, "Театрпа кинори драма актерӗ" специальноҫе алла илет.

Чӑваш патшалӑх академи драма театрӗнчи пӗрремӗш роле Лиза лайӑх ас тӑвать: "Парнеллӗ туй" спектаклти Ольга. "Чунсене чӗпӗтет ҫил-тӑман" спектаклти Любка сӑнарӗпе вара Лиза Хрисанфова республикӑри "Чӗнтӗрлӗ чаршав" театр конкурсӗнче "Чи лайӑх хӗрарӑм ролӗ" номинацире ҫӗнтерет.

2005 ҫултах "Ар ҫынсӑр хӗрарӑм" спектаклти Адела ролӗпе тӗрӗк халӑхӗсен тӗнчери "Наруз" театр фестивалӗнче мала тухать.

Тени хӗрӗ республика наградине те тивӗҫнӗ. Чӑваш наци культурине аталантарас енӗпе пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑшӑн, "Ялта" спектаклти Елюк сӑнарне лайӑх калӑпланӑшӑн Ҫамрӑксен патшалӑх премине панӑ ӑна.

Лиза ӳсӗм хыҫҫӑн ӳсӗм тӑвать. Ӗмӗчӗсем тата пысӑк унӑн. Тӗрлӗ чӑрмава ҫӗнтерсе ҫирӗп утӑмсемпе малалла утса чаксах "Чӑваш халӑх артистки" ята та илӗ-ха. Вӑй-халӗ ҫӑл куҫ пек тапса тӑнӑ чухне мӗн ӗмӗтленнине пурнӑҫлатех вӑл.

*Марина ДАНИЛОВА, 9-мӗш класс,*
*Елена ГЕРАСИМОВА, 7-мӗш класс.*

Тени шкулӗ.

# Шӑпчӑк сассиллӗ пӗчӗк артистсем

Лаша пуласси – тихаран, ҫын пуласси – ачаран паллӑ текен каларӑшпа килӗшесех пулать. Пӗчӗкренех юрра-ташша юратакан ӳссе ҫитсен кам пуласси те паллӑ ӗнтӗ. Ашшӗ-амӑшне кура ачан таланчӗ те аталанса вӑйланса пынӑ пек туйӑнать.

Мӑн Вылӑ шкулӗнче пӗчӗкренех хитре юрлакан икӗ хӗр ача вӗренеҫҫӗ. Соньӑпа Арина иккӗшӗ те чӑваш юррисене кӑмӑллаҫҫӗ. Вӗренӳре те тӑрӑшуллӑ вӗсем.

Соня Ивановӑпа Арина Васильева улттӑмӗш класра ӑс пухаҫҫӗ. Хӗр ачасем юрлама ҫеҫ мар, тӗрлеме те ӑста. Вӗсем музыка тата технологи предмечӗсене питӗ килӗштереҫҫӗ. Ҫак уроксене чӑтӑмсӑррӑн кӗтеҫҫӗ.

Аринӑпа Соня кӑҫал Шупашкарта иртнӗ "Сентти" ача-пӑча фольклорӗн конкурсне хутшӑнчӗҫ, 3-мӗш степень дипломне ҫӗнсе илчӗҫ. Кашни ҫулах "Мехел" эстрада конкурсне хутшӑнаҫҫӗ хӗр ачасем. Пӗлтӗр район шайӗнче иртнӗ конкурссенче те дипломсене тивӗҫнӗ.

Аринӑпа Соня Мӑн Вылӑ шкулӗн чысне хӳтӗлесе иртнӗ ҫул районти "Юрататӑп сана, Раҫҫей" патриотла юрӑсен конкурсӗнче виҫҫӗмӗш вырӑна тухнӑ.

Соня Иванова – "Сатлай" тата "Вула шевлисем" ача-пӑча фольклор ушкӑнӗсен солистки. Тантӑшӗпе, Аринӑпа, сцена ҫинче юрлама, пур ҫӗре те пӗрле хутшӑнма кӑмӑлланине палӑртрӗ вӑл. Иккӗшӗ те пӗчӗкрен таланчӗсемпе палӑрса тӑнӑран хӑйсен пуласлӑхӗ те сценӑпа ҫыхӑнасса шанаҫҫӗ. Ӳссе ҫитсен илемлӗ юрӑсем шӑрантаракан пулма ӗмӗтленеҫҫӗ.

*Кристина АРТЕМЬЕВА.*

Мӑн Вылӑ шкулӗ.

# Пур енчен те маттур

Акӑ вӑл чӑн чӑваш пики – Аня Матвеева. Унра чӑваш чунӗ, ҫепӗҫлӗхӗпе сӑпайлӑхӗ. Пултаруллӑ та маттур, анлӑ тавра курӑмлӑ, ҫивӗч ӑслӑ хӗр. Сӑвӑ-калав, инсценировкӑсем шӑрҫалать. Литературӑна юратнӑран «Ҫивӗч перо» кружока ҫӳрет. Пултарулӑх лаҫҫинче ӑсталӑхне туптать.

Аня «5» паллӑсемпе ҫеҫ вӗренет. Шкулти, ялти библиотекӑри чылай кӗнекене шӗкӗлчесе тухнӑ. Нумай вуланӑран чӗлхи якалса, пуянланса пырать. Хӑй ҫырнӑ хайлавӗсемпе наукӑпа практика конференцийӗсене те хутшӑнать. Республикӑра иртнӗ «Урхамахсем тӑрӑс тапӑртатса» конкурсра 3-мӗш вырӑна тухрӗ. «Асамат» фантастикӑлла калавне ҫамрӑк ҫыравҫӑсен хайлавӗсен кӗнекине те кӗртнӗ. Н.Терентьев, П.Осипов пьесисем унӑн чунне ҫывӑхрах. «Сценкӑсем хайласси лайӑххах пулать, вӗсем калавсенчен чылай ҫӑмӑлрах ҫырӑнаҫҫӗ», – пӗлтерет Аня.

Пур енлӗ пултаруллӑ хӗр тӗрлӗ конференципе конкурсра, олимпиадӑпа викторинӑра палӑрать. 2010 ҫулта «Букварьтен – илемлӗ литературӑна ҫити» конкурсра шкул пурнӑҫӗ ҫинчен ҫырнӑ сценкӑпа пӗрремӗш вырӑна тухрӗ. Уншӑн вӑл "Орленока" каймa тивӗҫлӗ пулчӗ.

– «Орленокра» пулнӑ кунсем нихӑҫан та асӑмран тухмаҫҫӗ, – тет Аня Матвеева.

Ҫут ҫанталӑкпа киленнӗ май курни-илтнине, йывӑҫ-курӑка сӑнавлӑ тӗпчесе шухӑшӗсене шурӑ хут ҫине куҫарать мал ӗмӗтлӗ Аня.

*Аня ЕВДОКИМОВА,*
*10-мӗш класс.*

Мӑн Ямаш шкулӗ.

# Ташăсăр ирттернĕ кун – усăсăр

**Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче шкул программине тепĕр сехет физкультура кĕртни Элĕк шкулĕнче вĕренекенсен пурнăçне тĕпрен улăштарчĕ темелле. Ташша юратакансем унччен те палăрнă-ха кунта, анчах физкультурăн виççĕмĕш сехетне Нина Андреевна Егорова ертсе пыма пуçласан вĕсен йышĕ палăрмаллах ӳснĕ. Çакăн вăрттăнлăхне пĕлес тесе эпир хамăр вĕрентекенпе калаçса пăхма шутларăмăр.**



**Ыйту: Нина Андреевна, физкультурăна уйăрнă 3-мĕш урок мĕнле иртет? Ыттисенчен уйрăлса тăрать-и вăл?**

**Н.А.:** Урокра эпир ташлатпăр. Занятисенче сцена валли хатĕрленместпĕр, хамăршăн ташлатпăр. Ытти урокпа танлаштарсан çакăнта кăна ача чăннипех канма, ялăххи çинчен манса кăмăл-туйăмне çĕклеме пултарать. Паллах, ачасене сынсен умне, сцена çине те кăлармалла. Ку вĕсене хавхалантарать, çавăнпа та конкурссене хатĕрленетпĕр, тĕрлĕ мероприятие хутшăнатпăр.

**Ыйту: Урок ирттернĕ чух йывăрлăхсем пулаççĕ-и?**

**Н.А.:** Пысăк йывăрлăхсемех çук, анчах мана хăш-пĕр ача вăтанни, хăрани, ташлама пĕлместĕп тесе айккинче тăни пăшăрхантарать. Кунта вĕсене пахаллаcа оценка лартмастпăр. Вĕсен тĕрлĕ хускану туса канма хăнăхмалла. Çакна хăш чухне ĕнентерме йывăр.

**Ыйту: Мĕнле шутлатăр, ачасене ритмика сехечĕсем килĕшеççĕ-и е кунта вĕсем урока расписание кĕртнипе кăна çӳреççĕ?**

**Н.А.:** Ачасен 90 процентĕ чун туртнипех çӳрет тесе калас килет. Урок сиктерекен сахал. Чи малтан кунта сывлăх çирĕпленет. Ташă вăл – хăйне майлă спорт. Çирĕплĕхе, хăвна алăра тытма вĕренетĕн.

**Ыйту: Пачах ташлама пĕлмен ачасене мĕн сĕннĕ пулăттăр?**

**Н.А.:** Нумайрах хускану тумалла, ташлама вăтанмалла мар тата уроксене сиктермесĕр çӳремелле.

Ритмика урокĕсем ачасен кăмăлне кайнине кунта иртнĕ мероприятисем тăрăх та хаклама пулать. Пирĕн сăмах «Хальхи çемĕре» уяв пирки пырать. Шкулти 300 яхăн çамрăк артист хутшăннă унта. Кашни класс уйрăм ташă хатĕрленĕ, костюмсем çĕленĕ – чăн-чăн пултарулăх лаççи пулнă вăл. Вĕренекенсемпе ашшĕ-амăшĕн хумханăвĕ, савăнăçĕ, тĕлĕнĕвĕ виçĕсĕр пулнă. Тăрăшни сая кайман. Районта иртекен «Пурте ташлатпăр! Пурте ташлаççĕ!» фестивальте Элĕк шкулĕ «Чи лайăх ташлакан шкул» ята çĕнсе илнĕ. Нина Егоровна вĕренекенĕсем – 7-мĕш «а» класс артисчĕсем «Ташлакан шкул» проекта хутшăнса республика шайĕнче район тата шкул чысне хӳтĕлеççĕ.

Расписанири сехетсен шучĕ ачасене çитмест. Уроксем хыççăн чи пултаруллисем «Штрих код» ташă студине çӳреççĕ. Ăна та Нина Егоровна ертсе пырать. Ку ушкăн кĕске вăхăтра районта палăрма пуçларĕ. Шкул тата район шайĕнчи пĕр мероприяти те вĕсемсĕр иртмест. Кунта тĕрлĕ класс вĕренекенĕсем çӳреççĕ, чи пĕчĕккисем вара ача садĕнчен те тухман-ха. Халĕ вĕсем пурте тăрăшсах «Вирьял шевлисем» фестивале хатĕрленеççĕ.

*Даша НИКИФОРОВА, Женя ЕГОРОВА, 6-мĕш "б" класс.*

Элĕк шкулĕ.

# Çар училищинче вĕренесшĕн

Çитĕнӳ тăрăшмасăр пулмастех. Спортра, сăмахран, ӳсĕм тăвас тесен тренировкăсене тăтăш çӳремелле. Кăçал вуннăмĕш класран вĕренсе тухакан Стас Егоров çакна яланах асра тытать, тренировкăсене сиктермесĕр çӳрет. Николай Петрович Васильев физкультура учителĕ ăна ку тĕлĕште яланах пулăшать.

Стас пиллĕкмĕш класра вĕреннĕ чухне район тата республика ăмăртăвĕсене хутшăнма тытăннă. Кĕске дистанцисене кăна мар, виçĕ пин метрлă инçĕшне те çăмăллăнах парăнтарнă вăл. Çитĕнӳсемшĕн тивĕçнĕ парнесен шучĕ те çук унăн.

Стас Егоров шкулăн волейбол, баскетбол командисен хастар членĕ те. Çак енпе ăмăртса туслă йыш пĕрре çеç мар çĕнтерӳçĕ пулнă.

Пур енлĕн аталанма тăрăшать каччă. Вăл вĕренекен класс «Ташлакан шкул» конкурса хутшăнса районта виççĕмĕш вырăна тухма пултарнă. Çирĕп сывлăхлă пулма тăрăшакан маттур шкул хыççăн çар училищинче хăйĕн пĕлĕвне малалла ӳстересшĕн.

# Спортра тăрăшуллисене ăнать

Шкул пурнăçĕнче вĕренӳ кăна мар, спорт та паллă вырăн йышăнать. Шĕмшеш шкулĕн ачисем физкультура урокне питĕ юратаççĕ, ăна чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Тĕрлĕ ăмăртуран пĕрре мар çĕнтерӳçĕпе таврăннă вĕсем.

Шкулăн футбол команди те тăтăш малтисен ретĕнче.

– Кăçалхи çул уйрăмах тухăçлă пулчĕ, – тет физкультура учителĕ Владимир Николаевич Трофимов. – Эпир виçĕ ушкăнпа малти вырăнсене йышăнса республика шайне тухма пултартăмăр. Ку, паллах, савăнтарать. Шкулта та çине тăрса хатĕрлентĕмĕр ĕнтĕ. 26 çул шкулта ĕçлени сая кайман тесе шутлатăп. Шкул директорĕ Андрей Владимирович Чернов та физкультура урокĕсене ертсе пырать, пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлени ӳсĕмсем тума пулăшать.

Футболла кăна мар, спортăн ытти енне те аталантарса пыраççĕ кунта. Çăмăл атлетикăпа та пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. Малтисен йышĕнче – 11-мĕш класри Женя Александров. Мĕн пĕчĕкренех çăмăл атлетикăпа туслă вăл. Футбол командин аслă ушкăнĕнче тăрать. Районти ăмăртусенче çĕнтерсе республикăра та тивĕçлипех тупăшать. Акă, нумаях пулмасть Çĕнĕ Шупашкарта икĕ çухрăма чупса Женя финала пĕрремĕш çитнĕ.

Ун пек маттурсем тата та пур Шĕмшеш шкулĕнче: Олеся Максимовăпа (11 класс) Ваня Кириллов (7 класс) та ыттисене тĕслĕх кăтартаççĕ.

– Пирĕн ачасем питĕ тăрăшуллă, пултаруллă. Аталансан пысăк ӳсĕмсем тăваççех. Вĕсем пурнăçне спортра çыхăнтарасса шанас килет, – тет Владимир Трофимов.

*Вика ПЛАТОНОВА.*

Шĕмшеш шкулĕ.

# Мал ĕмĕтлĕ хĕр

Кĕçĕн Тăван ялĕнче пурăнакан Лидия Прокопьева Тавăт шкулне вĕренме çӳрет. Вун пĕрмĕш класа кусnă хастар пике спортпа питĕ туслă. Вăл кашни çулах «Орленок» çарпа спорт вăййисене хутшăнать. Хăюллă та маттурскере виççĕмĕш çул отряд командирне суйлаççĕ.

Лидия çăмăл атлетсен ăмăртăвĕсене хутшăнса малти вырăнсене тухать. Унсăр пуçне КВНра, тĕрлĕ фестивальте хăйĕн пултарулăхне кăтартать. Вĕренӳ пирки вара нихăçан та манмасть. Унăн дневникĕнче лайăх паллăсем кăна. Аслисене пулăшма ĕлкĕрет, аппăшĕпе, йăмăкĕпе ялан пĕрле пулма тăрăшать.

Хастар хĕр малалла та çапла ăста, пултаруллă, кăмăллă пулас ĕмĕтлĕ.

*Валентина ПРОКОПЬЕВА, 8-мĕш класс.*

Тавăт шкулĕ.

# Таврари паллă чиркӳ



Ураскилт сăмах икĕ пайран тăрать. Пĕрремĕш пайĕ тĕрĕк чĕлхинчен, "ураз" телей тенине пĕлтерет, тепри чăваш сăмахĕ "килчĕ". "Телей килчĕ" тени пулать. Ураскилт ялĕнче вырнаçнă чиркӳпе мухтанмаллипех мухтанатпăр. Кунта районти пур ялсенчен те килсех çӳреççĕ. Пысăк тĕн уявĕсенче чиркӳ умĕнче ларакан машинăсен шучĕ те çук.

Чиркӳ историйĕ çакăнта ĕçлекенсем тăрăшнипе çырăнса юлнă. Ураскилт чиркĕвĕнче ĕçленĕ Сергей Дмитриевич Ялицев тияккăн çырса хăварнă интереслĕ фактсене асăнар-ха.

Чиркĕве малтан Мăн Вылă ялĕнче тăвасшăн пулнă. Ял çыннисем вара чиркӳ лартас шухăшлă хăнасене тараватлă кĕтсе илмен. Вĕсем кивĕ йăла-йĕркепех, православи тĕнне йышăнмасăр пурнăс кăмăллă пулнă. Хăнасем вара Ураскилт ялне çитнĕ. Ку ял çыннисем чиркӳ лартас шухăша хирĕçлемен. Çак пысăк ĕçе Ураскилт, Мăн Тукташ, Шĕнтреш, Тури Вылă, Мăн Вылă, Шураç, Çирĕккасси ял çыннисем хутшăннă. Малтан ăна йывăçран тунă. Чиркӳ пĕрре мар çуннă. Вара ăна чултан туса лартнă.

Ураскилт чиркĕвĕнче вăрçăччен Михаил Самсонович Самсонов пачăшкă ĕçленĕ. 1937 çулта ăна вунă çуллăха тĕрмене хупнă. Çакăн хыççăн чиркӳ пĕр вăхăт хупă тăнă, пачăшкă пулман. Вăрçă вăхăтĕнче патшалăх унпа тырă упрамалли кĕлет пек усă курнă.

1945 çултанпа паянхи кунччен Ураскилтри Таса Турă амăшĕн чиркĕвĕ халăха пухать. Паян чиркӳре Александр атте тăрăшать, унта халăх йышлă çӳрет.

*Татьяна САМОЙЛОВА, 7-мĕш класс.*

Ураскилт шкулĕ.

# Çичĕ çăл

Элĕк тăрăхĕнче чуна тыткăнлакан вырăн нумай. Шĕнтреш ялĕпе юнашар вара илемлĕ кăна мар, сăвапла вырăн пур. Çичĕ çăл тăрăхĕ теççĕ ăна. Кунта ĕлĕкрех манахсем, манашкăсем пурăннă. Сывăхрах пысăк хура хĕрес те пур. Çак вырăнта çăл куç нумай (ахальтен мар ячĕ – Çичĕ çăл). Ял çыннисем ĕлĕкех кунта таса сивĕ шыв илме çӳренĕ. Вăл тĕрлĕ чир-чĕртен сыватать тесе шутланă. Халĕ вара тĕпчевçĕсем те кунти шыв усăллă та сăвапла тесе çирĕплетеççĕ. Çу кунĕсенче, çул лайăх чухне кунтан çын татăлма пĕлмест. Пархатарлă ĕç тума ырă çынсем те тупăннă. Кунта халĕ илемлĕ çăл пури туса лартнă, шыва кĕмелли вырăнĕ те пур. Килекенсем таса шыва илсе кайма та пултараççĕ, çак сăвапллă шывпа чӳхенсе илме те май пур.

Çапла вара, тĕлĕнмелли пурнăçра юнашарах.

*Евгения ФЕДОРОВА, 8-мĕш класс.*

Ураскилт шкулĕ.

Редактор: Марина ТИМОФЕЕВА (Элĕк шкулĕ), редактор çумĕ: Вика ПЛАТОНОВА (Шĕмшеш шкулĕ).
Редколлеги членĕсем: Саша АФАНАСЬЕВА (Вутлан шкулĕ),Лена ГЕРАСИМОВА (Тени шкулĕ),
Таня САМОЙЛОВА (Ураскилт шкулĕ), Володя ИВАНОВ (Элĕк шкулĕ), Аня МАТВЕЕВА (Мăн Ямаш шкулĕ).
Тантăш Элĕк районĕнче

# Çивĕт – хĕр илемĕ



## Ку уява шкулта та, район шайĕнче те ирттерме пулать.
## Хутшăнакансем – 6-7-мĕш классенче вĕренекенсем

**1-мĕш ертсе пыракан:** Ырă кун пултăр, хисеплĕ вĕрентекенсем тата шкул ачисем!

**2-мĕш ертсе пыракан:** Хăнасене эпир хавас, килнĕшĕн кунта тавах!

Эпир паянхи куна илемлĕн ирттерĕпĕр. Хавасланма та, ăмсанма та ĕлкĕрĕпĕр. Хамăр сисмесĕрех тĕлĕкри евĕр, чăваш халăхĕн аваллăхне çитĕпĕр, вăл вăхăтра чăваш тумĕ тăхăннă хĕр ачасемпе паллашăпăр, курса савăнăпăр, вĕсен пултарулăхĕнчен тĕлĕнĕпĕр. Паян "Çивĕт – хĕр илемĕ" конкурс иртĕ.

**1-мĕш ертсе пыракан:** Конкурса хаклама сумлă жюри членĕсене (ячĕ-шывĕ) шанатпăр.

**2-мĕш ертсе пыракан:** Юмахра вăрăм çивĕтлĕ маттур та чипер хĕрсен сăнарĕсене час-часах тĕл пулатпăр. Пурнăçра вара ун йышши сахал.

**1-мĕш ертсе пыракан:** Халăх каларăшне аса илер-ха: "Çивĕт – хĕр илемĕ", – тенĕ ĕлĕкрен. Чăнахах та, илемлĕ те вăрăм, хулăн çивĕтпе нимĕнле хўхĕм тум та танлашаймĕ.

*Ўс-ха, çўçĕм, пилĕкрен*
*Тинĕс евĕр хумханса.*
*Юрататăп пĕчĕкрен*
*Хамăн сырă çивĕте.*
**2-мĕш ертсе пыракан:**
*Сан çинчен кусăма халь илеймĕп,*
*Юратма та никам хирĕç мар,*
*Хăюпа çивĕтне илемлетрĕн,*
*Явăнать хитрен хысалта.*

**1-мĕш ертсе пыракан:** Çивĕт ĕлĕкренех хĕр илемĕ пулнă. Вăрăм çўçлĕ хĕрсен чăннипех мухтанмалăх та пур. Вĕсем хăйсен çивĕчĕсене упранă, тĕрлĕ курăк шывĕпе çунă.

### I конкурс "Паллаштару"

**2-мĕш ертсе пыракан:** Халĕ хисеплĕ хăнасене кĕтсе илме вăхăт çитрĕ. Сцена çине конкурса хутшăнакан хĕрсене тухма ыйтатпăр.

Тархасшăн, тĕпелелле иртĕр. Пирĕн пĕрремĕш конкурс – "Паллаштару". Хĕрсем сире хăйсемпе паллаштарĕç, çўçе мĕнле пăхса ўстерни çинчен презентаци кăтартĕç. Кашни конкурсанта 3 минут уйăрса паратпăр. Хĕрсем, сире сăмах.

### II конкурс "Чăваш тумĕ – чун ыйтни"

**2-мĕш ертсе пыракан:** Пурте пĕлетпĕр, чăваш хĕрĕсене чăваш тумĕ сăн кĕртет, илĕртўллĕрех тăвать. Тепĕр конкурс вара: "Чăваш тумĕ – чун ыйтни". Хĕрсем хăйсен тумтирĕсем çинчен каласа парĕç. Хусканусене, хитрен утнине те хаклĕç жюри членĕсем.

**2-мĕш ертсе пыракан:** Маттур, хĕрсем! Тавтапуç! Эпир конкурса малалла тăсăпăр.

### III конкурс "Эпир – юрă-ташă ăстисем"

**1-мĕш ертсе пыракан:** Ĕлĕкхи вăхăтра пĕр уяв та юрă-ташăсăр иртмен. Тепĕр конкурс – "Эпир – юрă-ташă ăстисем". Чиперуксем пултарулăхне чăвашла юрă юрласа е ташласа кăтартĕç.

*"Илемлĕ" чăваш юрри янăрать.*

Сцена çине конкурсантсене чĕнетпĕр.

### IV конкурс "Чи вăрăм çўç"

**2-мĕш ертсе пыракан:** Аса илер-ха К.Ивановăн "Нарспи" поэминчи сыпăка:

*Явăнаççĕ хысалта*
*Çивĕт вĕçĕ кăтрисем.*
*Утса-утса пынă чух*
*Шăнкăртатать тенкисем.*

"Чи вăрăм çўç" – пирĕн тепĕр конкурс пулĕ. Хутшăнакансене çивĕчĕсене сапалама ыйтатпăр.

### V конкурс "Çўçе çивĕтлес ăсталăх"

**1-мĕш ертсе пыракан:** Эх! Епле маттур пирĕн хĕрсем! Пурин те çўçĕ хитре, вăрăм. Çакă хĕрсен илемлĕхĕ çинчен пĕлтермест-и-ха? Маттур эсир, несĕлсен паха йăлисене упракансем. Пирĕн черетлĕ конкурс – "Çўçе çивĕтлес ăсталăх". Ĕçе пурнăçлама сире 5 минут паратпăр. Жюри членĕсем хĕрсем çўç çивĕтлеме пĕлнине, хитре пуçтарнине хаклĕç.

*Шкулти фольклор ушкăнĕн номерĕ.*
*Куракансемпе ĕçлесси. (Вăхăт юлсан).*

Залра ларакансемпе çўç çинчен калакан халăх каларăшĕсене аса илер-ха. Кам нумайрах пĕлет?

1. Хĕрарăмăн çўçĕ вăрăм, ăсĕ кĕске теççĕ.
2. Сан çўç пĕрчине те тăмасть вăл.
3. Çўç вирелле тăрать.
4. Пуçĕ пур та – çўçĕ çук, çăварĕ пур та – сасси çук. (Пулă).

**2-мĕш ертсе пыракан:** Конкурсантсем хатĕр. Вĕсем пире хăйсен илемлĕ прическисемпе паллаштарĕç. Тархасшăн!

### VI конкурс "Несĕлсен ăс-хакăлĕнчен тĕслĕх илер"

**1-мĕш ертсе пыракан:** Чăваш халăхĕ çўçе ялан хакланă, ăна тирпейлĕ тытнă. Мĕн чухлĕ юрă-сăвă хывман-ши вăрăм çивĕтсем çинчен!

*Пирĕн ялăн хĕрĕсем –*
*Çинçе пилĕклĕ вĕсем.*
*Çўçĕсене çивĕтлесен*
*Терешкова пек вĕсем.*

Тепĕр конкурс – "Несĕлсен ăс-хакăлĕнчен тĕслĕх илер".

Несĕлсем çўçе епле тирпейлени çинчен каласа пама ыйтатпăр сире, хитре пикесем.

### VII конкурс "Çивĕт – хĕр илемĕ"

**2-мĕш ертсе пыракан:** Халĕ вара хĕрсем хăйсен сăввисемпе паллаштарĕç. Конкурс ячĕ – "Çивĕт – хĕр илемĕ".

**1-мĕш ертсе пыракан:** Жюри членĕсем пĕтĕмлетў тунă хушăра тепĕр вăйă выляса илĕпĕр.

Антонимсене асăнăр:
– уяр (пĕлĕтлĕ)
– ерипен (хăвăрт)
– нўрĕ (типĕ)
– ай (çи)
– ăш (тулаш)
– йĕпен (типĕн)
– йăва ( сайра)
– такăр (тумхахлă)
– сĕвек (чăнкă)
– сиен ( усă)
– тăкак (тупăш)
– ĕçчен (наян).

Жюрисене сăмах паратпăр. Вĕсем чи хитре çивĕтлĕ тата чи пултаруллă пикене, чăвашлăх илемне упракан хĕре палăртĕç.

**2-мĕш ертсе пыракан:** Пысăк тав сире, хисеплĕ хăнасем, конкурса хутшăннă хĕрсем! Тепре тĕл пуличчен!

**1-мĕш ертсе пыракан:** Сывă юлăр, юлташсем! Çивĕт – хĕр илемĕ пулнă та, пулать те.

### Хушма материал:

**1-мĕш ертсе пыракан:** Конкурс залра ларакансем валли. Ачасем, эсир пирĕнпе ĕçлеме хатĕр-и?

– Мĕнле юхан шыв ячĕ çумне хупă сас палли çырсан глагол пулать? (Атăл – катăл, ватăл, татăл).

– Мĕнле паллă ятĕнчи пĕрремĕш сас паллине кăларсан урана тăхăнмалли сăмах пулать? (Ватă – ată).

– Мĕнле япала ячĕ умне "В" лартсан паллă ячĕ пулать? (Анчăк – ванчăк).

Тавтапуç сире, ачасем. Питĕ лайăх ĕçлерĕр!

Хĕрсем хатĕрленнĕ хушăра ахаль лармăпăр, вăййă выляса илĕпĕр.

Сăмаха пĕрле çырмалла пулсан шăпăрт ларатпăр, дефиспа пулса – урасемпе тăпăртататпăр, уйрăм пулсан – алă çупатпăр. Кам пĕрре те йăнăшмасть, çавна парне кĕтет.

– Ал сыппи, асар-писер, алсиш, суту-илў, куса-кусăн, ас ту, вăй-хăват, вĕçен кайăк, ĕç укçи, йĕп-йĕпе, кунран-кун, сут çанталăк, пуç пўрне, куççуль.

**2-мĕш ертсе пыракан:** Чиперуксем ĕçленĕ вăхăтра тепĕр вăйă выляса илĕпĕр.

**1-мĕш ертсе пыракан:** Çĕр улмирен мĕнле апатçимĕç пĕçерме пулать? Ячĕсене асăнăр.

**2-мĕш ертсе пыракан:** Конкурс вĕçлениччен вăхăт пур-ха. Сире валли тепĕр вăйă – "Тĕрĕс пĕл".

– Пĕрремĕш чăваш букварьне кам тата хăçан çырса хатĕрленĕ? (И.Я. Яковлев, 1872 ç.)

– Сулахайран сылтăмалла та, сылтăмран сулахаялла та пĕр пек вуланакан сăмахсем тупса калăр. (Çўç, ала, сўс, хĕрĕх, аппа, ана, калак, куккук).

– "Е" сас палли пилĕк-уллă хутран кая мар тĕл пулакан сăмахсем тупăр. (Перекетлентерекенсемпеле, чееленекенсенченехчĕ-çке-ха, теекенсемпеле).

– "К" сас паллипе пуçланса çав сас паллипех пĕтекен сăмахсем тупса калăр. (Кашăк, кунтăк, кăпăк, карчăк, курăк, кăк, кĕрĕк, кантăк, калпак).

***Галина ЕНЕЙКИНА.***

Елчĕк районĕ,
Патреккел шкулĕ.

# Тĕрлĕ халăх çамрăкĕсем «Пурте пĕр çул-йĕрпе» лагерьте

ССС 1-мĕш стр.

– Пухăннисем пурте питĕ ăслă, анлă тавра курăмлă. Юрлаççĕ, ташлаççĕ. Мана чăнах та тĕлĕнтерчĕç вĕсем. Аслă çынран та тăнлăрах пек туйăнать, – шухăшне пĕлтерет И.Н. Ульянов ячĕллĕ ЧПУ журналистика факультечĕн 4-мĕш курс студенчĕ Н.Александрова.

Иккĕмĕш кун вĕçĕнче çамрăксем этнодискотекăра савăннă. Чăваш тумне тăхăннă Виктор тăван чĕлхепе юрă шăрантарнă. Хўхĕм Наталья вара ташласа тĕлĕнтернĕ. «Епле хитре чăваш кĕписем, мĕнле чипер эсир, сире çитекенни çук кунта», – тесе темиçен те пырса калаччĕ вĕсене. Тупмалли юмахсем парса çитĕнекен ăрăвăн ăс-тăн çивĕчлĕхне те тĕрĕсленĕ. Пирĕн Н.Александрова татах палăрма пултарнă. «Чи ăсли» ята тивĕçнĕ вăл.

Тепĕр ирхине – Бураново ялне васканă. Кăçалхи «Евровидение» хутшăнакан «Бурановские бабушки» ушкăнпа тĕл пулнă унта. Хăшĕ-пĕри Бакуна кайма ĕлкĕрнĕ те. Ансамбль валли сăвă çыракан Лиза аппай кăна вырăнта. Юрăçсем çамрăксене удмуртсен тĕп апачĕпе «перепечипе» хăналанă хыççăн пурте пĕр харăс ташша янă. Йышра чăвашсем те пулни тăстан курăннă – Наталья питĕ тăрăшнă. Кайран ялти музейра, шкулта пулса курнă хăнасем. Каç енне сулăнсан «Узы Боры» фильм пăхма пуçтарăннă. Ку кинона ўкерекенсем – удмурт яш-кĕрĕмĕ.

Тăваттăмĕш кунхине «Ырă кăмăллăх урокĕ» иртнĕ. Вырăнти лайăх курман ачасен интернат шкулне хўме сăрласа пулăшнă. Сăррисене йăлтах йĕркелўçĕсем туяннă. Çул çинче тунсăхласа вăхăта сая яман вĕсем. Халăхсен хушшинчи пĕрпеклĕхсене тĕпченĕ. Сăмахран, чăвашсен те, удмуртсен те «мунча», «чипер» сăмахсем пур. Юрăсен кĕвĕлĕхĕ те, йăла-йĕрке пайĕсем те питех уйрăлса тăмаççĕ. Рустам Галимовпа Наталья Александрова вырăсла-чăвашла сăвă та çырнă.

Тепĕр пысăк пĕлтерĕшлĕ япала пирки те асăнмалла. «Тĕнчери халăхсен тĕпелĕнче» кашнинех сăйланма май пулнă.

– Эпĕ еврейсен апат-çимĕçне тутанас терĕм. Питĕ тутлă, чĕлхене çăтса ямалла пĕçереççĕ. Вĕсем апатра ытларах пахча çимĕçпе усă курнине асăрхарăм, – шухăшкăмăлне палăртать чăваш хĕрĕ.

Ижевск хулин илемĕпе киленме те вăхăт тупнă яшсемпе хĕрсем. Паллă вырăнсене çитсе курнă, историйĕпе паллашнă. Тĕслĕхрен, хула талисманĕ – Ижик çинчен халиччен илтмен те вĕсем. Ăна кунта пурăнакансем çăрасем пухса ирĕлтерсе ăсталанă иккен.

Юлашки кунхине хăйсене пĕр çемьери пек туякан çамрăксем кунашкал тĕл пулусем татах пуласса шанса тăван тăрăхĕсене саланнă. Тĕрлĕ çĕртен пуçтарăннă хĕрсемпе каччăсене пурне те сертификат панă. Дамир Садртдинова «Чи хавасли» тесе палăртнă.

Удмурт çĕрĕнчен тулли кăмăлпа таврăннă Наталья Александрова хăйĕн ĕмĕчĕсене уçса пачĕ:

– «Узы Боры» авторĕсемпе эпир пĕрле фильм ўкерес ыйтăва пуçартăмăр. Этнодискотека тăвас шухăш та çуралчĕ. Ĕмĕтсем пысăк, пурнăçа кăна кĕртесчĕ. Тĕрлĕ халăх культурипе, историйĕпе, çыннисемпе тата вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашни, çыхăну тытни питĕ лайăх, усăллă.

***Светлана САДАЛ.***

# Халăх асĕнчи, куракансен чĕринчи артистка




**«Мана твансем манчĕç пуль,**
**Асăнми те пулчĕç пуль?..» – хурланса юрланă ЧАССР халăх артистки Елена Васильевна Шорникова спектакльсенчен пĕринче. Çулсем витĕр те чĕррĕн янăрать унăн тĕлĕнмелле уçă та хăватлă сасси. «Манман! Эсир халăх асĕнчех, куракансен чĕринчех», – тесе хуравлас килет ăна. Чакка арăмĕ (Çемен Элкер «Хĕн-хур айĕнче»), Ухвине (Илле Тукташ «Хурăнлă çулпа»), Маруç (Николай Терентьев «Арканнă юрату»), Вера Александровна (Л.Родионов «Сенкер кӳлĕ») тата ытти ăста калăпланă сăнарсем, театр искусствипе çыхăнтарнă пурнăç... Чăваш тĕнчинче паркаланса çитĕннĕ, чăвашшăн тар юхтарнă, кашни роле хăвăр витĕр кăларнă, сывлăш вĕрсе кĕртсе кун-çул парнеленĕ... Пыл хурчĕнни пек ĕçченлĕхĕрпе, хурçă çирĕплĕхĕрпе, чăн чăвашла сăпайлăхăрпа, иксĕлми вăй-хăватăрпа ĕçтешĕрсемшĕн те, тусăрсемшĕн те ырă тĕслĕх пулнă эсир. Ахальтен пухăнмарĕç-çке тăванăр-ентешĕрсемпе пĕлĕш-тантăшăрсем К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрне.**

Çу уйăхĕн 14-мĕшĕнче Елена Васильевна çуралнăранпа 100 çул çитнине халалланă аса илӳ кунĕ иртрĕ. Ăна Чăваш халăх артисчĕ Геннадий Медведев ертсе пычĕ. Уява драма театрĕн артисткисем çамрăксен юррисемпе уçрĕç. Алсиш-нуски çыхнă, тĕрĕ тĕрленĕ, çăм арланă май шăрантарчĕç хаваслă юррисене. Е.Шорникована аса илсе ăшă сăмах калакан чылай пулчĕ. «Елена Васильевнапа эпĕ тăхăр çул çеç пĕрле ĕçленĕ. Апла пулин те, ĕмĕрĕпех пĕрле пек, халĕ те вăл çумрах, таçтан пăхса тăрать пек туйăнать. Чи-чи çывăх çын пулнă вăл маншăн. Пултарулăхра талпăнма чун хавалĕ парса, пулăшса пынă. Театра килсенех анне вырăнĕнче пулнă Елена Васильевна маншăн. Унпа пĕр пӳлĕмре ларма тӳр килни – пысăк телей. Чăн-чăн чăваш хĕрарăмĕччĕ вăл. Мĕн пур ырă ен пĕрлешнĕ унра. Елена Васильевнан чи юратнă ролĕсенчен пĕри Лиза Короткова пулнине çирĕплетсех калама пултаратăп. Ялан аса илетчĕ вăл ăна. Сцена çине кăларассишĕн те нумай тăрăшнă хăй вăхăтĕнче.

Чăннипех те çирĕп кăмăллă, тӳсĕмлĕ артистсен ăрăвĕ пулнă. Пурте пысăк талантлă... Театр – вĕренӳ шкулĕ. Яланах вĕренмелле, аталанмалла. Ун чухне Е.Шорникова пек пултаруллă актрисăсен вылявне ытларах сăнаманнишĕн, вĕсен опытне çителĕклĕ таран ăша хывманнишĕн çеç пăшăрханатăп», – куççульленсех сăмахларĕ РФ тата ЧР халăх артистки Нина Яковлева.

Елена Васильевнапа тата унăн çемйипе Чăваш халăх поэчĕ Порфирий Афанасьев та туслă пулнă иккен. Час-часах курнăçнă, пĕр-пĕрин патне хăнана çӳренĕ. «Федор Ермиловичпа (Хветĕр Уяр çыравçă. – **авт.**) Елена Васильевна телейлĕ те илемлĕ мăшăрччĕ. Вĕсем шăкăл-шăкăл пуплени, куçран пăхсах пĕр-пĕрне ăнланни тĕлĕнтеретчĕ», – терĕ сăвăç.

Артисткăн 100 çулне паллă тума тăван тăрăхĕнчен те, Çĕрпӳ районĕнчи Уйкасран килсе çитнĕ хăнасем. Ял администрацийĕн пуçлăхĕ Анатолий Пермяков Тав çырăвĕ вуласа пачĕ, çĕртме уйăхĕнче Е.Шорникова ячĕпе палăк лартасса пĕлтерсе пурне те çав мероприятие чĕнчĕ. Шкул директорĕ, РФ тата ЧР тава тивĕçлĕ учителĕ Ганна Андреева Елена Васильевна пултарулăхне хакланине, артист профессийĕ сумлă кăна мар, йывăр та яваплă пулнине



пытармарĕ. «Пирĕншĕн артист тени – халăхпа хутшăнакан, яш-кĕрĕмпе хĕр упраça вĕрентсе пыракан этем. Çитĕнекен ăру ватăсен йăлисене, вĕсем хушса хăварнине асрах тытать», – терĕ вăл. Шкул ачисемпе вĕрентекенсем пухăннисене юрласа-ташласа савăнтарчĕç.

Валерий Карповпа Надежда Кузьмина çепĕç те тарăн шухăшлă юррисемпе тыткăнларĕç. Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Çамрăксен театрĕн актрисисен те каламалли тупăнчĕ. Чăваш халăх артисткин Валентина Сурикован шăпине Елена Васильевна татса панă тесен те йăнăшмăн. Çамрăк хĕр театртан кайма шут тытсан шăпах Е.Шорникова тытса чарнă ăна. Темĕнле йывăрлăх пулсан та, вĕсене çĕнсе малалла талпăнма, инкекпе хурлăха тӳссе ирттерме хавхалантарнă ăслă хĕрарăм. «Чунлă, ăшă сăмахсем каласа вăхăтра ал панишĕн тав тăватăп», – тет паян В.Сурикова.

«Спектакльсене тĕплĕ хатĕрленнĕ Елена Васильевна. Пире пурне те чăтăмлă пулма вĕрентнĕ вăл. Ку вара пурнăçра питĕ кирлĕ. Чăтăмлăх çынна ăнланма, каçарма, юратма пулăшать. Чунăмăрсем тăвăнса çитсен, ывăнсассăн лăплантарма та пултаратчĕ пире», – аса илӳ çăмхине сӳтрĕ Чăваш халăх артистки Лидия Красова. Светлана Савельева гастроль пурнăçĕн чатăрне уçрĕ. Темиçе уйăх ют çĕрте çӳресе йăлăхнă артистсен часрах килĕсене таврăнас килнĕ-мĕн. Çавăнпа хайхискерсем спектакле кĕскетме шутланă. Анчах Е.Шорникова мăнаçлăн сцена çине тухнă та хăй рольне выляса пăрахнă. «Эпир ывăннишĕн, васканишĕн куракансем айăплă мар», – тенĕ вăл çăмăлттай ăслисене. Паллах, ун тĕслĕхĕ çамрăксене витĕм кӳмесĕр иртмен. Кашнинех харкам тыткаларăшне тишкерме, улшăнма хистенĕ.

РФ тата ЧР халăх артисткишĕн Нина Григорьевашăн та Елена Васильевна анне вырăнĕнчех пулнă. Чăваш хĕрарăмĕн сăнарне ун пек ăста калăплакана тек пĕлмест вăл. «Ун сăнарĕсем чăн чăвашла типтерлĕ те кăмăллăччĕ. Кĕтерука выличчен питĕ нумай тар тăкма лекнĕ. Юрăсене пĕрчĕн-пĕрчĕн тенĕ пек пуçтарнă. Кайранхи артисткăсене çăмăлтарах килнĕ ку тĕлĕшрен», – палăртрĕ Н.Григорьева. Ырă хĕрарăмсене кăна мар, усаллисене те выляма тивнĕ Е.Шорникован. Пĕррехинче гастрольте чухне пăтăрмахлă лару-тăрăва та кĕрсе ӳкнĕ вăл. Хваттере янă кил хуçи арăмĕ пĕр спектакль хыççăн шалт та палт кĕртмен ăна килне. «Кай, кай! Сан пек усал çын кирлĕ мар мана!» – тата ытти çакăн евĕрлĕ сăмах каласа питĕрнĕ те лартнă алăкне. Актриса çав таранччен ĕнентерӳллĕ выляни çапла тума хистенĕ те кăткăс пулăмсене сӳтсе явма, пурнăçпа илемлĕх тĕнчине уйăрма хăнăхман хĕрарăма.

«Е.Шорникова – чăваш театрĕн çутă çăлтăрĕ», – терĕ СССР халăх артистки Вера Кузьмина. Уява Елена Васильевна хĕрĕсен аса илĕвĕсем вĕçлерĕç. Юратупа ăнланура ӳстернĕшĕн Луиза Федоровна ашшĕпе амăшне чунтанах тав турĕ. «Аннен сасси вăйлăччĕ. Илемлĕ юрлатчĕ вăл. Юмах вырăнне театр хыпарĕсене, чăн пулнисене каласа паратчĕ. Театр уншăн пĕрремĕш вырăнта пулнă пуль?.. Тепĕр чухне çавăнпах ӳпкелешеттĕмĕр те», – ачалăхне таврăнчĕ Тамара Федоровна. Хĕр пĕрчисен час-часах ашшĕпе юлма тивнĕ. Амăшĕ çул çӳревсенче чухне хытă тунсăхланă уншăн. Елена Васильевна чĕри те килнелле туртăннах ĕнтĕ. Анчах куракансене пăрахса хăварайман вăл. Мăшăрĕпе тĕпренчĕкĕсем ăнланнă ăна. Мĕншĕн тесен юратнă... чи таса та хĕрӳллĕ туйăмпа.

«Нарспи», «Ял кулли», «Кай, кай Ивана», «Виçĕ туй» спектакльсенчи сыпăксене итлесе Е.Шорникован чĕрĕ сассипе киленме пултарчĕç пухăннисем. Ку темрен те паха. ЧАССР халăх артисткин çамрăксене каланă сăмахĕ вара халал пек янăрарĕ. Хĕрсене сăпайлăх илем кӳни пирки те, чăвашла пуплеме вăтанмалла марри çинчен те асăнчĕ вăл унта. Манас марччĕ çакна, манас марччĕ Елена Васильевна Шорникована!

# Ыр кăмăллăх сăнчăрĕ ан татăлтăр!

**Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Çамрăксен театрĕ «Инвалид тата тăлăх ачасен Шанчăк Сăпкийĕ» республикăри обществăлла организаципе пĕрле «Салам, театр!» проекта пурнăçа кĕртме тĕллев лартнă. Ун аудиторийĕ – сывлăх енĕпе хавшакрах, ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр юлнă çамрăксем, ача çурчĕсемпе интернат шкулсен воспитанникĕсем. Пĕчĕклех хĕн-терт мĕнне пĕлсе ӳсекенскерсене ытларах та тимлĕх уйăрмалли каламасăрах паллă. Никама кирлĕ мар пек ан туйччăр хăйсене. Чĕре суранĕ пирчетĕрччĕ тесен таврари çынсен ырă та ăш пиллĕ пулмалла. Вĕсен юратăвĕпе хисепне туймалла кунашкал пепкесен. Шеллени вара пусăрăнтарать кăна.**

Йывăр лару-тăрури яш-кĕрĕмпе хĕр упраça пурнăçăн анлă çулĕ çине тухма, ĕç тупма çăмăл мар. Ниçта та çăкăр-тăварпа кĕтсе илмеççĕ. Хăр-хар кăшкăрнипе те, йĕкĕлтешни-кулнипе те, ӳрĕк-сӳрĕклĕхпе те тĕл пулма тивет. Çакна йăлт тӳсме, каçарма пысăк çирĕплĕх кирлĕ. Ура çине тăрса çут тĕнчере харкам хăй вырăнне тупмалла, тивĕçлĕ ирттермелле ĕмĕре. Тăват кĕтесре хупăнса лармалла мар. Аталанмалла, пĕлӳ патне туртăнмалла, пур майпа та усă курмалла.

Театр шăпах чуна ирĕке яма, тавра курăма анлăлатма пулăшать. Ятарлă студие е кружока çӳрекенсем тантăшĕсенчен хăюллăрах, правуртарах. Ялан тенĕ пек хаваслă вĕсем. Çĕнĕ çынсемпе те çăмăллăнах паллашаççĕ, часах пĕр чĕлхе тупаççĕ. Теприн ыратăвне те çивĕчрех кураççĕ. Театр, чăннипех, чĕресене хĕмлентерет.

Проектпа килĕшӳллĕн чылай мероприяти палăртнă: Çамрăксен театрĕн чи лайăх спектаклĕсен кăтартăвĕ; грим вăрттăнлăхĕсемпе паллаштаракан мастер-классем; сцена пуплевĕн, хусканăвĕн, актер ăсталăхĕн семинарĕсем. Ачасем куракансем кăна пулмĕç. Пултарулăх процесне активлă хутшăнĕç. Хăйсем те спектакль лартса пăхĕç. Режиссерсемпе, актерсемпе, ӳнерçĕсемпе тĕл пулса калаçĕç, кăсăклантаракан ыйтусен хуравĕсене илейĕç. Пурнăçра мал ĕмĕтлĕ пулни, ниме пăхмасăр малалла талпăнни мĕн тери пĕлтерĕшлине пĕрре мар калĕç-ха вĕсене паллă çынсем.

Пирвайхи мероприятисем Улатăр хулинче çу уйăхĕн 17-мĕшĕнче иртнĕ ĕнтĕ. М.Азовăн «Когда поют светофоры» спектакльне курса киленнĕ коррекци интернат шкулĕн шăпăрланĕсем. Çывăх вăхăтра Çĕмĕрле кĕтет. Унти ачасем валли те парне хатĕр – С.Козловăн «По зеленым холмам океана» постановки тата Раççей тава тивĕçлĕ артисчĕпе, театрпа кино актерĕпе Сергей Фетисовпа курнăçни, сăмахлани.

Аван шухăш тытнă проект йĕркелӳçисем. Ӳркенмесен пурте хутшăнма пултараççĕ унта. Ыр кăмăллăх сăнчăрĕ ан татăлтăр тесен кашниннех пуçаруллă та хастартарах çеç пулмалла.



Рубрикăна Ольга ИВАНОВА (тел. 56-11-80) хатĕрленĕ.